Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 АВГУСТ 21 ВЫРСАРНИКУН 192 (5005) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—87, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—1—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, йалхуçалăх пайĕн—4—97, советсен пайĕн—0—88, промышленнăç пайĕн—7—97, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн—6—23.

Учитĕлсен августри канашлăвĕсем тĕлне

Пайăнран пуçласа августăн 28-мĕшĕччен республикăри пур районсенче те учитĕлсен виçĕкунлăх канашлăвĕсем пулса иртеççĕ. Çак канашлусене пуçламĕш, тулли мар вăтам тата вăтам шкулсенчен 6 пине йахăн учитĕлсем пухăнаççĕ.

Пысăк ыйтусем пăхса тухмала пулать канашлусенче. Çĕнĕ вĕренў çулне хатĕрленесси çинчен тата учитĕлсен заочнă вĕренес ĕçне лайăхлатасси çинчен тăракан ыйтусемпе пĕрлех, канашлусен кун йĕркинче тĕнчери лару-тăру çинчен ыйту тăрать. Çак ыйту вăл ăнсăртран тухса тăмасть. Совет учитĕлĕ вăл, чăн малтан, халăх учитĕлĕ. Совет учитĕлĕ совет интеллигенцийĕ хушшинче чи пысăк йышлă пайĕнчен пĕри. Вăл совет халăхĕн йуратнă, хисеплĕ çынни. Ун çинче çамрăк совет патриочĕсене вĕрентсе çитĕнтерес пысăк та хисеплĕ задач тăрать. Унăн совет халăхĕнчен уйрăм шухăшсем, тĕллевсем çук, вăл совет халăхĕпе пĕр шухăшлă, пĕр кăмăллă. Хальхи вăхăтра хĕвеланăçĕнче Германипе Итали фашисĕсем Пиреней çурмаутравĕ çинче демократишĕн, ирĕклĕ пурнăçшăн кĕрешекен Испани халăхне урнă йытă пек тулани те, хĕвелтухăçĕнче Йапони самурайĕсем Китайри мирлĕ халăхпа хуласене вутпа йун айне туса пĕтерме тăни те совет учитĕлне пĕр пекех тарăхтарать. Йапони самурайĕсем пирĕн Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи чикĕсем патне пырса хăйсен сысна сăмсисене чикме тăрсан, совет учитĕлĕсем пĕтĕм совет халăхĕпе пĕр шухăшлă пулса тăван çĕршыва сыхлама хатĕррине кăтартрĕç. Пайантан ĕçлеме тытăнакан канашлусенче пирĕн учитĕлсем партипе совет правительстви тавра, халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ тавра нихăçанхинчен те çирĕп пĕтĕçсе тăнине тата тепĕр хут кăтартĕç, вĕсем совет правительстви тытса пыракан мирлĕ политикăна ырлĕç, пур йышши тăшмансене те—тулти тăшмансемпе шалти тăшмансене—фашисăмăн троцкисла-сылтăмла агенчĕсемпе буржуалă-националиссен йулашкисене пĕр çын хăварми кăкласа пĕтерме хатĕр тăнине кăтартĕç.

Ленин—Сталин партипе совет правительстви шкул пирки хытă тăрăшаççĕ, вĕсем совет учитĕлĕ вальли нихăçан пулман лайăх условисем туса пачĕç. Партипе правительствă совет шкулĕшĕн мĕн пек хытă тăрăшнине ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ çирĕплетнĕ бюджет та лайăх кăтартса парать. 1938 çулта халăха çутта кăларас ĕçе кăна 20,1 мĕлйард тенкĕ пама йышăннă. Пирĕн республикăра, Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕн 10-мĕш çессийĕ йышăннă тăрăх, 1938 çулта халăха çутта кăларас ĕçе 68,1 мĕлйун тенкĕ кайать. Вăл укçаран çĕнĕрен 33 шкул туса лартмала.

Совет учитĕлĕ хăйне хисепе хунипе, уншăн партипе правительствă тăрăшнипе хĕпĕртесе савăнать, хăйĕн шкулĕпе мухтанать. Пирĕн учитĕлсем хăйсен пĕтĕм вăйне халăха çутта кăларас ĕçе параççĕ. Пирĕн учитĕлсем социалисăмăн активлă строителĕсем. Вĕсем хушшинче хăйсен пĕтĕм ăнланулă пурнăçне халăха çутта кăларас ĕçре ирттернĕ ветерансем те сахал мар (Муравйова—Улатăр, Димитрийева—Йĕшек, т. ыт. те). Çулран-çул отличник-учитĕлсен йышĕ ўсет. Вĕсем çĕршерĕн шутланаççĕ. И. С. Сергейĕв (Иелчĕк районĕнчи Тускелти пуçламĕш шкул учителĕ), В. К. Куçмина (Елĕкри вăтам шкулти учителници), А. И. Иванова (Çĕрпў районĕнчи пуçламĕш шкулти учителници), Черпакова (Шупашкар) т. ыт. йачĕсене пĕтĕм республика пĕлсе тăрать.

Анчах учитĕлсем хушшинче, уйрăмăнах—çамрăккисем хушшинче педагогика ăсталăхне пĕтĕмпех хăнăхса çитейменнисем те пур-ха. Учитĕлсен канашлăвĕсем çамрăк учителсемшĕн отличниксенчен ĕçлеме вĕренмели, пример илмели шкул пулса тăмала. Çавăнпа та кунта учитĕл-отличниксен йертсе пыракан вырăнта пулмала, вĕсен хăйсен ĕç меслечĕсемпе, лайăх опычĕсемпе пĕтĕм учитĕлсене паллаштармала, совет çамрăкĕсене коммунисла воспитани мĕнле памалине кăтартмала.

Канашлусен иртнĕ вĕренў çулĕсен итогĕсене пăхса тухса çĕнĕ вĕренў çулĕн задачисене палăртса хăвармала. Çĕнĕ вĕренў çулĕнче пирĕн текех иртнĕ çулсенче палăрнă çитменлĕхсемпе йăнăшсене тумала мар, тăшмансем туса хăварнă сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтĕмпех пĕтермеле. Çапла тунипе—вĕренўпе воспитани ĕçне парти Тĕпкомĕпе Сталин йулташ кăтартса панă пек туса пымала, тăван çĕршыва ăслăлăха çĕнсе илнĕ патриотсем, коммунисла строителсем памала.

Халăх тăшманĕсем халăха çутта кăларас фронтра пире сахал мар сийен туса хăварчĕç. Вĕсем хăйсен сăтăрла ĕçĕсене чи ыратмала вырăнта—çамрăксене коммунисла воспитани парас ĕçре туса пынă, шкула пăтранчăк учебниксем, программăсем парса вĕренў пахалăхне начарлатнă. Иртнĕ 1937—38 вĕренў çулĕнче малалахи классене куçаймасăр йулнисен хисепĕ 10 пин çынтан иртнĕ. Ку пирĕншĕн пысăк урок пулмала. Çавăнпа та тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес тесен, чăн малтан, республикăри пур шкулсенче те пĕр класра иккĕмĕш çул лармала пулнине пĕтересси пулать. Çак ыйту тавра мобилизацилемеле пĕтĕм учитĕлсен, пĕтĕм общественнăçăн тимлĕхне.

Буржуалă-националиссемпе ытти тăшмансем уйрăмах чăваш шкулĕсенче вырăс чĕлхине вĕрентессине кайри вырăна хăварма тăрăшнă. Çавăн пекех чăваш чĕлхине вĕрентессинче те пăтраштарусем туса пĕтернĕ. Акă мĕншĕн вырăс чĕлхипе чăваш чĕлхине вĕрентес ыйту уйрăмах пысăк вырăн йышăнмала канашлусен ĕçĕнче.

Шкулсенче тăшмансем пĕтерсе лартнă методикăлă пĕрлешўсемпе предметлă комиççисене тепĕр хут чĕртсе йамала пулать. Çакăн пирки те канашлусен хăйсен татăклă сăмахне каласа хăвармала.

Кĕçех вĕренў çулĕ пуçланать. Халĕ пур шкулсенче те вĕренў çулне хатĕрленес йĕнĕпе хĕрў ĕçсем пымала. Çĕнĕрен лартакан шкулсене васкавлăн туса пĕтермеле, кивисене йусамала, вут-шанкă çителĕклĕ таран хатĕрлесе хумала, учебниксем, вĕренў пособисем кўрсе килмеле, çул çитнĕ çамрăксене шкула организацилĕн хутшăнтармала, ĕçре палăракан пур çитменлĕхсене те пĕтермеле,—çапла тунипе çĕнĕ вĕренў çулне тивĕçлĕн хатĕрленсе илмеле.

Пур шкулсенче те лайăх вĕрентмеле тăвассишĕн социалисăмлă ăмăртăва сарса пырар, пур учитĕлсене те ăмăртăва хутшăнтарар. Парти Тĕпкомĕпе Сталин йулташ шкул çинчен кăтартса панисене пурнăçа кĕртер.

Учитĕлсене канашлу умĕнче тăракан пур ыйтусене те ăнăçлăн татса пама сунатпăр.

Çĕрулми кăларнă çĕрте ĕçлекен тракторниссене тата машинсемпе ĕçлекенсене ĕçшĕн тўлесси çинчен

ССР Сойузĕн Çĕр-ĕç Халăх Комиссариачĕ колхозсене çĕрулми кăлармалли икĕ ретлĕ машинăсемпе ĕçлекен машиниссене тата тракторниссене ĕçшĕн тўлеме, преми пама çĕнĕ йĕрке тума сĕнет. Кунне 2,5 гектар таран çĕрулми кăларсан, тракторниса кашни гектаршăн 1,6-шар ĕçкунĕ, машинăпа ĕçлекене—1,2-шар ĕçкунĕ. 2,5 гектартан ытларах кăларнă кашни гектаршăн тракторниса—2,4 ĕçкунĕ, машинăпа ĕçлекене—1,8 ĕçкунĕ шутласа памала.

Тракторниспа машиниса, вĕсем 35 гектар ытларах çĕрулми кăларнă пулсан (20 кун хушши кайарах ĕçлесе), преми-надбавкă памала.

(ТАСС).

72.000 мăшăр атă пушмак

Шупашкарти тир-сăран савăтĕнче атă-пушмак тăвас ĕç кăçал пĕлтĕрхинчен чылай вăйлă пырать. Халĕхи вăхăтра савăт кашни куна 600 мăшăр ытла тĕрлĕрен пушмаксем туса кăларать, кашни уйăхра 10 пин мăшăр ытла атă-пушмак тăвать.

Кăçалхи çулăн пĕрремĕш çурçулĕнче тир-сăран савăчĕ хăйĕн çурçулхи планне 102,6 процент тултарнă, 61.572 мăшăр тĕрлĕрен атă-пушмаксем туса кăларнă. Çичĕ уйăх хушшинче савăт пурĕ 72.000 мăшăр атă-пушмак тунă.

ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ

Августăн 19-мĕшĕнче пулнă ларусен дневникĕ

Национальнăçсен Советĕнче

Августăн 19-мĕшĕнче кăнтăрла Национальнăçсен Совечĕн çиччĕмĕш ларăвĕ пулнă, унта „ССРС гражданстви çинчен“ калакан саккун пройекчĕ çинчен тунă доклад тăрăх пренисем малала пынă.

Ложăсем çинче—партипе правительствă руководителĕсем, ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн членĕсем, Халăх Комиссарĕсем.

— Пирĕн çĕршыври—социалисăм çĕршывĕнчи ĕççыннисем,—тет депутат Петров,—Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕн гражданинĕ йатне чыслăн илсе çўреççĕ тата тăван çĕршыва вĕçĕ-хĕррисĕр йуратса социалисăм çĕршывĕн гражданинĕн тивĕçлĕхне чаплăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Гражданин тивĕçлĕхне пысăккăн туйса тăнине пирĕн геройсем—Папанин, Ширшов, Кренкел, Федăрăв, пирĕн сталинла мухтавлă сокăлсем—Чкалăв, Байдуков, Бельаков, Громăв, Коккинаки, Проскурăв тата ытти чаплă геройсемпе героиньăсем хăйсен хăйуллă та паттăр ĕçĕсенче кăтартса пачĕç. Пирĕн совет гражданĕсем Инçет-Хĕвелтухăçĕнче социалисăм çĕршывĕн чиккисене пăсма хăтланнă Йапони самурайĕсене чыслăн, пархатарлăн тата паттăрăн çапса салатрĕç.

— Депутат йулташсем,—тет Петров депутат,—ССРС Верховнăй Совечĕн Çессине тухса килес умĕн мана чикĕ хуралĕнчи тата Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн чаçĕсенчи бойецсемпе командирсем, пирĕн советлă социалисăмлă Молдавири рабочисем, колхозниксем тата служащисем партипе правительствăна тата йуратнă Сталина çакна шантарса калама ыйтрĕç: хамăрăн Хĕвеланăçĕнчи чикĕсене сыхлас ĕç—шанчăклă та çирĕп аллăсенче.

Хăйĕн сăмахне пĕтерсе, Петров йулташ телейлĕ, хавасла пурнăçшăн Сталин йулташа чысласа „урра“ кăшкăрать. Пур депутатсемпе хăнасем те ура çине тăраççĕ, Сталин йулташа чысласа, нумайччен чарăнмасăр оваци тăваççĕ.

Депутат Ибрагимăв Сталинла Конституци ССРС гражданĕсене панă аслă, етемлĕх историнче халиччен пулман правасем çинчен калать. Вăл правасем совет гражданинĕн тивĕçлĕхне вĕçĕ-хĕррисĕр хăпартаççĕ. Совет гражданинĕн çак прависем револьуци туса панă материаллă ырлăхсемпе пурнăçа кĕрсе пыраççĕ.

Депутат Федăрăв хăй сăмахĕнче совет гражданĕсен патриотисăмĕ çинчен, чĕрĕ çыншăн сталинла тăрăшни çинчен калать.

— Совет гражданстви,—тет Федăрăв йулташ,—кирек мĕнле урăх çĕршыв гражданствинчен те çакăнпа уйрăлса тăрать: совет гражданинĕ хăйĕн тăван çĕршывĕн пурнăçне активлăн хутшăнса ĕçлекен, хамăрăн калама çук пысăк, пуйан тата чечекленсе тăракан çĕршыв пурнăçне тулли правасемпе хутшăнса ĕçлекен çын пулса тăрать.

— Хăв калама çук пысăк та вăйлă коллективăн членĕ пулнине туйса тăма питĕ лайăх,—тет вăл.—Çирĕп çыхăнăва, кашнинех паракан пулăшăва çапла ăнланса туйса тăни стахановла ĕçĕн чаплă образецĕсене тăвать, пирĕн хăйуллă льотчиксене тĕнчери рекордсем тума пулăшать, пирĕн бойецсене хăйуллă та паттăр ĕçсем тума çунатлантарса çĕклет. Пирĕншĕн хамăрăн пĕтĕм тăван çĕршыв тăрăшнине пĕлсе тăни, пире пăр çинче канăçлăн ĕçлеме май пачĕ, мĕншĕн тесен пире кашни минутрах пулăшу парасса епĕр пĕлсе тăнă.

Пренисенче çавăн пекех Вершков, Новикăв (Чăваш АССР), Трутнев депутатсем тухса каларĕç, вĕсем „ССРС гражданстви çинчен“ калакан саккун пройектне пурте пĕр кăмăлпа ырланă.

Йулашки сăмах илсе, докладчик депутат Булганин тухса калать. Йулашки сăмах хыççăн Национальнăçсен Совечĕ „ССРС гражданстви саккунне“ пĕр саслăн çирĕплетет.

Сойуз Советĕнче

Августăн 19-мĕшĕнче каçхине Сойуз Совечĕн 7-мĕш ларăвĕ пулса иртнĕ, унта „ССРС гражданстви çинчен“ калакан саккун пройекчĕ çинчен тунă доклад тăрăх пренисем малала пынă.

Ложăсем çинче—партипе правительствă руководителĕсем, ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн членĕсем, Халăх Комиссарĕсем.

Пренисенче Корнейчук, Братановский, Ахунбабайĕв, Образцов, Шагадайĕв, Каракулăв, Алийĕв депутатсем тухса калаçнă. Тухса калаçакансем пурте саккун пройектне ырлана, ССР Сойузĕнчи халăхсен пĕрлĕхне çирĕплетес ĕçре, вĕсене Ленин—Сталин партийĕ тавра тата ытларах тачă пĕтĕçтерес ĕçре вăл пысăк вырăн йышăнса тăнине палла тунă.

—„ССРС гражданстви çинчен“ калакан саккун пройекчĕн тĕллевĕ—хамăрăн социалисăмлă тăван çĕршыв хăватне малашне тата ытларах тĕреклетесси,—тет депутат Братановский.

Епĕр—капиталисăмлă йĕри-тавралăх варринче. Епĕр пĕлетпĕр, фашиссем халь те совет çĕрĕсене туртса илме ĕмĕтленеççĕ, вĕсем пире хирĕç чи ирсĕр провокацисем тăваççĕ.

Пирĕн Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи чикĕре Йапони военщини ирсĕр провокаци турĕ. Çакна хирĕç ответлесе Совет Сойузĕнчи гражданĕсене мĕнле хайар çилĕ хумĕ çавăрса илнине епĕр куртăмăр. Йапони агрессăрне мĕнле отпор панине епĕр пĕлетпĕр.

Совет патриотисăмĕн хĕрўлĕ туйăмĕпе, хăйĕн тăван çĕршывне, хăйĕн учитĕлне тата çулпуçне Сталин йулташа йуратса тăнин туйăмĕпе, совет халăхĕ социалисăм строителствин малашнехи çитĕнĕвĕсемшĕн, хамăр чикĕне никама тĕктерес марришĕн кĕрешет.

— Епĕр,—тет депутат Ахунбабайĕв,—ССРС гражданинĕн чаплă йачĕпе пĕтĕм тĕнче умĕнче мухтанатпăр. Епĕр вăл пирĕн çине хуракан правасемпе тата обйазаннăçсемпе мухтанатпăр. Узбек СС Республикĕн халăхĕсем ССРС гражданинĕн йатне чаплăн тытса пырĕç тата хамăр тăван çĕршывăн халăх хуçалăхне татах çĕклес ĕçре, оборонă тĕрекне татах çирĕплетес ĕçре хăйсен обйазаннăçĕсене чыслăн пурнăçа кĕртсе пырĕç.

— ССРС гражданстви çинчен калакан саккун,—тет депутат Шагадайĕв,—совет халăхне тата ытларах пĕрлештерсе пĕтĕçтерĕ. Аслă Совет Сойузĕн нумай мĕлйунлă халăхĕсем хăйсен социалисăмлă тăван çĕршывне тата вăйлăрах йуратĕç. Вĕсем Сойузăн таса чиккисене пăсма нихăçан та никама та ирĕк парас çук. Ăна шантарса тăраканни—пирĕн никам çĕнтерейми тăван Хĕрлĕ Çар, ССР Сойузĕнчи халăхсен большевикла парти тавра, аслă çулпуç Сталин йулташ тавра нихăçанхинчен те ытларах пĕтĕçсе чăмăртаннă халăхсен туслăхĕ.

Йулашки сăмах илсе, докладчик-депутат Булганин тухса калаçать.

Унтан Сойуз Совечĕ „ССРС гражданстви саккунне“ пĕр саслăн çирĕплетет.

Лару вăхăтĕнче ССРС Йустици Халăх Комиссарĕ Рычков йулташ тухса каласса, çакна пĕлтерет: ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тăратнă ССРС судоустройствă саккун пройектне Национальнăçсен Совечĕ чылай улăштарусем тата редакцилĕ тўрлетўсем кĕртнĕ, вĕсем Сойуз Совечĕ йышăннă улăштарусемпе тата тўрлетўсемпе килĕшеççĕ. Çакăнпа пĕрлех, Национальнăçсен Совечĕ саккунăн хăшпĕр стайисене çĕнĕле редакцилесе, вăл стайисене Сойуз Совечĕ йышăннă чухнехинчен кăшт урăхларах редакцилесе йышăннă.

Рычков йулташ правительствă йачĕпе, „ССР Сойузĕн, сойузлă тата автономлă республикăсен судоустройствă саккунĕ“ çав стайисене Национальнăçсен Совечĕ редакцилесе йышăннă пек çирĕплетме сĕнет, вăл судсен задачисене тата тĕплĕнрех, тĕрĕсрех палăртать.

Рычков йулташ сĕнўне Сойуз Совечĕ пĕр саслăн йышăнать.

(ТАСС).

Августăн 19-мĕшĕнче Национальнăçсен Совечĕн ларăвĕнче И. В. НОВИКĂВ депутат каланă сăмах

Депутат йулташсем! Епĕр Булганин депутатăн „Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕн гражданстви çинчен“ калакан саккун пройекчĕ пирки тунă докладне итлерĕмĕр. ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Верховнăй Советăн Иккĕмĕш Çессинче пăхса тухса çирĕплетме тăратнă çак саккун пройекчĕ государствă тата политика йĕнчен калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл кам ССР Сойузĕн гражданинĕ пулнине тата кам ССР Сойузĕн гражданинĕ пулма пултарнине палăртса парать тата Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕн гражданинĕн йатне татах та çўлерех çĕклет.

ССРС гражданстви çинчен калакан саккун пройектне Сталинла Конституци тăрăх тунă. Вăл саккун аслă социалисăмлă совет государствинчи пĕтĕм халăхăн ирĕкне, вăл мĕншĕн тăрăшнине тата унăн кăмăлне палăртса парать. Çавăнпа та епĕ „Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕн гражданстви çинчен“ калакан саккун пройектне çирĕплетесси пирки панă сĕнўпе пĕтĕмпех килĕшетĕп.

Гражданствă саккунĕ чĕрĕ çыншăн, социалисăмлă тăван çĕршыври ĕççыннисемшĕн сталинла пысăккăн тăрăшнине палăртса тăрать. ССРС Верховнăй Совет Çессинче йышăннă ытти документсем пекех, çак саккунра социалисăмлă державăн хăвачĕ татти-сыпписĕр ўссе пынине, совет çĕршывĕнчи ирĕклĕ гражданĕсен вăйĕпе хăватне ўссĕн тата палăрăн кăтартса панă тата вăлăн çирĕплетсе кăтартнă.

Пирĕн партин, унăн Ленинла-Сталинла Тĕп Комитечĕн, çулпуçĕн тата учитĕлĕн—Сталин йулташăн тĕрĕс политикине пула, социалисăмлă економика ўссе тĕрекленсе пырать, пирĕн ытарайми пахалăх социалисăмлă тăван çĕршывăн вăйĕпе хăвачĕ ўссе пыраççĕ тата ĕççынни массисен материаллă тата культурăллă пурнăçĕ лайăхланса пырать.

Хуларипе йалти ĕççыннисем культурăллă, пуйан тата савăнăçлă пурăнма пуçларĕç. Пирĕн çĕршывра çуклăха, ĕççĕрлĕхе тата правасăрлăха пĕтĕмпех те йаланлăхах пĕтерсе хунă. Çаксем пурте вĕсем—Октйабĕрти Аслă револьуцин результачĕ, вăл револьуцине пирĕн большевиксен мухтавлă, никам çĕнтерейми коммунисла партийĕ, Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе тунă. Çаксене пурне те епĕр етемлĕхĕн аслăран та аслă генийĕ Сталин йулташ ССРС гражданĕсемшĕн кунсерен ырми-канми тăрăшнипе пула турăмăр. (Алă çупаççĕ).

Партипе правительствă пирĕн çĕршыври гражданĕсемшĕн тăрăшнине епĕр пур çĕрте те куратпăр. Çакна судоустройствă çинчен халь çеç йышăннă саккун та уйрăмах янăххăн палăртса тăрать. Çав саккунăн 2-мĕш стайинче ССР Сойузĕнчи правосудин задачи вăл—„ССР Сойузĕнчи гражданĕсен политикă, ĕç, пурăнмалли çурт-йĕр тата ытти пурлăх тĕлĕшĕнчи прависемпе интересĕсене—ССРС Конституцийĕ, сойузлă тата автономлă республикăсен Конституцийĕсем гарантиленĕ правасемпе интересĕсене“ тĕрĕслĕхе пăсассинчен хўтлесси пулать тăрать, тесе калать.

Судоустройствă саккунне, „Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕн гражданстви çинчен“ калакан саккун пройекчĕ пекех, тĕнчере чи демократилĕ Сталинла Конституци тăрăх тунă. Вĕсем пирĕн социалисăмлă тăван çĕршыври гражданĕсен прависене—Октйабĕрти Аслă Социалисăмлă револьуци çĕнсе илнĕ правасене сыхласа тăраççĕ тата ĕçре пурнăçа кĕмелле тăваççĕ.

Сталинла Конституци тата пирĕн саккунсем социалисăмлă обшчествăн пысăкран та пысăк çитĕнĕвĕсене тата пирĕн ирĕклĕ çĕршыври гражданĕсен прависене çирĕплетсе сыхласа тăраççĕ.

Социалисăмлă тăван çĕршывăн гражданинĕ пулассин—асларан та аслă чыс. ССРС гражданинĕ пулни вăл—пĕтĕм халăхпа пĕрле, Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе, аслă çулпуç Сталин йулташ йертсе пынипе социалисăм строителствине активлăн хутшăнса ĕçлессине, пирĕн çĕршывăн хăвачĕпе оборонă пултарулăхне тĕреклетессине пĕлтерет. Совет Сойузĕн гражданинĕ пулни вăл—халăхăн мĕн пур тăшманĕсене татăклăн çĕмĕрсе тăкса пĕтерсе хурассине пĕлтерет.

Пирĕн çĕршыври мĕн пур ĕççыннисен, вĕсен расăлă тата нацилĕ уйрăмлăхĕсене пăхмасăрах, пуриншĕн те пĕрлĕхлĕ те тăван социалисăмлă государствă—Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕ пур,—вăл государствăна пĕртан правалă советлă социалисăмлă республикăсем хăйсен ирĕкĕпе пĕрлешсе тунă. Пирĕн совет халăхĕ хăйĕн мĕн пур шухăшĕсене, ĕмĕчĕсене тата ĕçĕсене социалисăм строителствине, культурăна малала вăйлатса пырас çĕре, ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатас, пирĕн çĕршывăн оборонă пултарулăхне тĕреклетес çĕре йарать.

Акă мĕншĕн енте Совет Сойузĕнчи ĕççынни массисем морально-политика йĕрлĕх пĕрлĕхлĕ çирĕп тата пирĕн гражданĕсем хăйсен амăшне—тăван çĕршывне, большевиксен партине мĕн пур ĕççынни массисен йуратнă тусне, учитĕлне, асларан та аслă çынна—Иосиф Виссарионăвич Сталина вĕçĕмсĕр йуратаççĕ. (Тăвăллăн, нумайччен алă çупаççĕ).

Пирĕн нумай нацилĕ, нумай мĕлйунлă халăх пĕр çемйе пек туслă пурăнать, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисене телейлĕ те хаваслă пурнăçа мĕнле тумалли çинчен пример кăтартса парать. Пĕтĕм халăх пĕр ĕмĕтпе хавхаланнă—вăл коммунисăмлă обшчествă туса çитересси патне хăвăртрах та шанчăклăрах малала кайма тăрăшать.

Совет Сойузĕн халăхĕ ирĕклĕ те телейлĕ халăх. Пирĕн халăхран вăл Октйабĕр кунĕсенче çĕнсе илнисене тата иртнĕ çирĕм çул хушшинче Ленинпа Сталин генилĕ тата ăслăн йертсе пынипе туса хунисене туртса илме пултаракан вăй çук.

Кам та кам епĕр çĕнсе илнисем çине алă çĕклеме хăтланать, вăл ĕççыннисен, пирĕн социалисăмлă совет государствинчи гражданĕсен пĕрлĕхлĕ, хастарлă, çирĕп çемйин гранитлă стени çине пырса тăрăнĕ, ăна пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкĕç те, пĕтерсе хурĕç.

Совет Сойузĕнчи пĕтĕм халăх, партипе правительствă пĕрре чĕнсенех, пирĕн социалисăмлă державăн таса чиккисене хўтлеме кирек хăш минутра та пĕр çын пек хир тăрса тухĕ. Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çара, лайăхран та лайăх полководец тата Сталин йулташăн чи çывăх соратникĕ Совет Сойузĕн пĕрремĕш маршалĕ Климент Йефремăвич Ворошилăв (тăвăллăн, нумайччен алă çупаççĕ) йертсе пыракан Хĕрлĕ Çара нумай мĕлйунлă совет халăхĕ йалан хĕрўллĕн пулăшса тăрать, малала та пулăшса тăрĕ.

Фашисăмăн ирсĕр тирĕсем, социалисăмлă тăван çĕршыва сутакансем, ирĕклĕ те телейлĕ совет

([illegible] страницăра).

Августăн 19-мĕшĕнче Национальнăçсен Совечĕн ларăвĕнче И. В. НОВИКĂВ депутат каланă сăмах

(ЙУЛĂШКИ)

граждăнсен тăшманĕсем, халăх тăшманĕсем, пирĕн çĕршывра ĕлĕкхи пек тепĕр хут капиталисăм туса хума хăтланчĕç, çапла тунипе вĕсем ĕççынни массисем çине капиталисăмлă експлоатаци сăнчăрне тăхăнтартма, вĕсене çĕнсе илнĕ правасемсĕр тăратса хăварма, вĕсене чурасем туса хума хăтланчĕç.

Ирсĕр те ылханлă сутăнчăксем, фашисăм тарçисем йанăшрĕç! Сталинла нарком Николай Иванăвич Йежов (алă çупаççĕ) йертсе пыракан мухтавлă НКВД органĕсем вĕсен тăшманла сăпса йăвисене çĕмĕрсе тăкрĕç, çапла тунипе ССРС граждăнĕсен прависем çине алă çĕклеме памарĕç.

Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн органĕсем тата пĕтĕм совет халăхĕ халăх тăшманĕсене малашне те, чи ирсĕр çĕлен-калтасене пĕр хĕрхенусĕр çĕмĕрсе тăкнă пек, пĕтерсе пырассине фашиссемпе вĕсен троцкисла-бухаринла бандăри агĕнчĕсем асра тытчăр.

Депутат йулташсем! „Советлă Социалисăмлă Республикăсен Союзĕн гражданстви çинчен" калакан саккун пройекчĕ совет гражданинĕн йатне тата çӳлерех çĕклет.

Сталинла Конституци совет çĕршывĕнче граждăнсене ĕçлев прави, вĕренӳ прави, канăç прави т. ыт. парса гарантилет.

Тĕслĕхшĕн илер акă Чăваш АСС Республикине. 1913 çулта Чăваш республикĕнче вĕренекенсем 19 пин çын пулнă. Вĕсем халь 180 пин çын. Ылханлă патша самани вăхăтĕнче пирĕн вăтам шкулсем пĕччĕнĕн-пĕччĕнĕн çеç шутланнă, халь вăхăтра Чăваш республикĕнче вăтам шкулсенче 40 пин ача вĕренет. Елĕкхи вăхăтра пирĕн аслă вĕренӳ заведенийĕсем пĕртте пулман. Халь пирĕн 4 ВУЗ пур, вĕсенче 2 пин студент ытла вĕренеççĕ. Çак цифăрсем социалисăмлă çĕршыври граждансен вĕренӳ прави йепле пурнăçа кĕрсе пынине çав тери ĕнентерӳлĕн кăтартса пара́ççĕ.

Пирĕн çĕршывра ĕçлев прави мĕнле пурнăçа кĕрсе пыни çинчен калама кирлех те мар. Мĕншĕн тесен пирĕн çĕршывра ĕççерлĕх çук тата пулма та пултараймасть. Совет стройĕн условийĕсенче ĕç вăл йăвăр мар,— вăл чыслăх мухтавлăх, пархатарлăх тата паттăрлăх ĕçĕ пулса тăчĕ.

Акă мĕншĕн пирĕн ĕç геройĕсен çарĕ, промышленнăçри, социалисăмлă çĕрĕçĕнчи тата пирĕн хуçалăхăн ытти отрăçлисенчи стаханăвĕçсен çарĕ кашни кунах ӳссе пырать. Пирĕн социалисăмлă тăван çĕршыври кашни гражданин хăйĕн ыранхи кунĕ çинчен шанчăклăн шухăшласа пурăнать. Вăл ыран ĕççĕр йулас çуккине пĕлет. Хăйĕншĕн сталинла тăрăшнине вăл кунсеренех туйса тăрать.

Сталин йулташ ăшшăн тăрăшнипе хавхаланнă ĕççынни массисем, аслă Сталин йертсе пынипе, çĕнĕ çĕнтерӳсем патне, коммунисăм туса çитересси патне пыраççĕ. (Алă çупаççĕ).

Вăйлă тырпул туса илнĕ

Çĕрпӳ районĕнчи „Вучах" колхозри бригадăсем вăйлă тырпул туса илессишĕн пĕр-пĕрипе ăмăртса ĕçлерĕç. Агротехникăлă ĕçсене вăхăтра тата тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пычĕç. Çавăнпа тырпул вăйлăн çитĕнчĕ. Анса пулнă тырпула колхозниксем кĕске срукрах пуçтарса кĕчĕç.

Авăн çапнă чухне кăçал вăтам шутпа кашни гектартан мĕн чухлĕ тырă тухнине тĕрĕслерĕç. Ыраш гектартан—19 шар центнĕр, кĕрхи тулă—25-шер центнĕр тухать. Çапла вара „Вучах" колхоз йалхуçалăх выставкиĕче пулма илнĕ тивĕçлĕхе çирĕппĕн тытса тăрать. Колхоз государствăна тырпул тăратмали обйазатĕлствăна пурнăçланă. Çак кунсенчех авăн çапса пĕтерет.

К. Михайлăв.

Обйазатĕлствăна пурнăçланă

Кăпасри (Тутаркас р) „Ким" колхоз тырпулсене уйран тăккаламасăр ăнăçлăн пуçтарса кĕчĕ. Тырпулсене пуçтарса кĕрес ĕçре Михайлăв бригади мала тухрĕ. Ку бригадă çуртрисене планпа пăхнинчен кун çурă маларах вырса пĕтерчĕ.

Халь колхозра хĕрсех авăн çапаççĕ, çуртри кĕлтисене турттарса капана хываççĕ.

„Ким" колхоз государствă умĕнчи обйазатĕлствăсене вăхăтра парса татассишĕн кăçал çине тăрса ĕçлерĕ. Колхоз государствăна ыраш тата çуртрисене парса татрĕ.

С. Савелйĕв.

Государствăна сӳс-кантăр параççĕ

Елĕк районĕнчи сӳс-кантăр савăтне колхозсем сӳс-кантăр пама тытăнчĕç. Мăн Шемертен (Йетĕрне районĕ) колхозĕ паха сӳс кантăр парса, пĕрремĕш квитанци илчĕ. Елĕк районĕнчен: Мăн Вылă колхозĕ, Çирĕккассинчи „Самолёт" колхоз сӳс панă. Çав хушăрах хăшпĕр колхозсем пусана лайăх типĕтмесĕрех тийесе пыраççĕ. Çуткӳлĕри (Тутаркас р.) „Восход" колхоз йĕпе пусана илсе пынă.

Колхозсен государствăна паха сӳс парассишĕн тăрăшса ĕçлемеле.

З. Николайĕв.

Вĕренӳ çулĕ умĕн

Тасалăх çинчен маннă

Тăп тăваткăл шурă пӳлĕмре иккĕн лараççĕ. Вĕсем пĕлӳ тĕрĕслевне кĕме хатĕрленеççĕ. Пӳлĕм алă кĕ уçăлать те алăк тĕлĕнче Петров комендант курăнса кайать.

— Петров йулташ, мĕншĕн нимре вальли шыв ĕçме пĕр курка та тупса памастăр?

— Епĕр шыва витре хĕррийе ĕçетпĕр,—терĕ С. йулташ вулама чарăнса.

Комендант нимĕн те чĕнмест. Унăн ăшĕнче çакăн пек шухăш пурри паларать: „ытла та ир йурлатăрçке есĕр... Есĕр халь пирĕн студентсем пулаймăн-ха. Те кĕрейетĕр, те çук..."

Çавăнпа та пулĕ çак пĕлӳ тĕрĕслевне килнĕ çамрăксем лараканпӳлĕрмĕн урайне те шăлса тасатмаççĕ. Урайĕнче ик-виçĕ кунхи çӳп çап сапаланса выртать. Пӳлĕмĕн шурă çтенисем çине сăнаса пăхсан, кунта пурăнакансем кашни каçах хăнкăласемпе ывăнниччĕнех кĕрешнине" туйса илетĕн. Койкăсем çинче тусанлă матрассемсĕр пуçне урăх нимĕн те çук. Çапла кĕтсе илнĕ Чăвашсен педагогикă институчĕ пĕлӳ тĕрĕслевне килекенсене.

Пединститут директăрĕн хуçалăх йенĕпе ĕçлекен заместителĕ Морковкин хăйĕн кабинетĕнчен сайра çеç тухса çӳрет. Общежитисенче пулмасть. Унта вĕренӳ çулне хатĕрленесси питĕ сӳрĕккĕн пулса пырать. Пӳлĕмсене дезинфекци тăвасси çинчен те вĕренӳ çулĕ çитсе перĕнсен тин аса илнĕ. Дирекци студентсен общежитийĕсене культурăлă тăвассишĕн тăрăшмасть. Комендантсем час-часах улшăнаççĕ.

Калас пулать, студентсене таса та культурăлă пӳлĕмсенче усрасси шкулсен дирекцийĕсен пысăк задачи пулса тăрать.

Кăçал пединститутра 1300 студент вĕренмеле. Çĕнĕрен 570 çын вĕренме илеççĕ. Вĕренӳ пахалăхне хăпартасси студентсен пурнăç условине лайăхлатнинчен нумай килет. Кăна тума пединститутра условисем çителĕклĕ. Халĕ тата çĕнĕрен чаплă общежити туса пĕтереççĕ. Тунă килçуртсене культурăлă тытасси шĕн кӳллен тăрăшни çеç кирлĕ.

В. Д-н.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленмеççĕ

Трак районĕнчи шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне халĕ те хатĕрленсе çитеймеççĕ-ха. Районра пĕтĕмпе 42 шкул, вĕсенчен пĕри те пайанхи куна вĕренӳ çулне хатĕрленсе çитмен-ха. Ачасене çулахи каникула йанă хыççăн нумай шкул директăрĕсемпе заведуйушчисем шкулсене никамсăр хăварса салан са пĕтнĕ пулнă. Акă, Терерти туллимар вăтам шкулах илер. Шкул директăрĕ П. Захарăв хăй вырăнне никама хăвармасăрах канмали çурта тухса кайнипе, шкул чылай вăхăт питĕрĕнсе тăчĕ. Çавна пула та шкул халĕ çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленсе çитеймест. Кăçал пурĕ 9 клас пулать. Ку классем 7 çуртра вырнаçмала. Вăл çуртсене йусаттарман. Вутă çителĕклĕ кӳмен.

Çавăн пекех Çĕнйал Упири пуçламĕш шкул та чылай вăхăт питĕрĕнсе тăчĕ. Вĕренӳре кирлĕ хатĕрсене илмен, вутă кӳмен.

Уика çумĕнчи, Шурçырмари пуçламĕш шкулсенче пĕрремĕш класcем вальли пӳлĕмсем çитмеççĕ, партăсем çук. Кăçалхи вĕренӳ çулĕ тĕлне, Упипе Албахтинăри туллимар вăтам шкулсен çурчĕсене туса пĕтермеле пулнă. Албахтинăри шкул çурчĕн никĕсне çеç хывнă, стройматериалсем çителĕклĕ мар, платниксем çук.

Ф. Миронăв.

Вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсем

Йелчĕк районĕнчи шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне пайанхи куна çитсе те хатĕрленсе çитеймеççĕ. Тĕмерти пуçламĕш шкулăн (заведуйушчийĕ Дмитрийĕв) тата 100 кубла метр вутă кӳмеле. Доскасем çитмеççĕ, кăмакасене йусаттарман. Вĕренӳре кирлĕ хатĕрсене илмен.

Тайапари туллимар вăтам шкул та вĕренӳ çулне хатĕрленсе çитмен. 10 партă, 2 пӳлĕм çитмест. Чӳречесем ваннипех лараççĕ, вутă кӳмен, учебниксем, хут, кăранташсем илмен. Кĕркуннехи тĕрĕслеве хăварнă ачасемпе учителсем ĕçлемеççĕ.

Çавăн пекех Тимĕшри пуçламĕш шкул та (заведуйушчийĕ Осипăва) вĕренӳ çулне хатĕрленсе çитеймен-ха. Пӳлĕмсене, партăсене йусаттарман. Вутă пĕр кубла метр та кӳмен.

Пĕтĕмĕшпе илсен, районри шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленсе çитмен-ха.

Ф. Бельайĕв.

Мăн Вылăри библиотекă

Мăн Вылăри (Елĕк р-нĕ) библиотекă уйрăмах йулашки çулсенче лайăх ĕçлеме пуçларĕ. Библиотекăра тĕрлĕрен кĕнекесем 3171. Унта Маркс, Енгĕлс, Ленин, Сталин кĕнекисем нумай. Вырăс халăх писатĕлĕсем çырнă кĕнекесенчен „В деревне", „Мать", „Евгений Онегин," „Хлеб", „Как закалялась сталь" тата ытти те пур. Вулакансен йышĕ пысăк, тăтăшах вулакансем 529 çын.

Библиотекăр Матрена Матвейăва илемлĕ литературăсене вăтă колхозниксемпе колхозницăсене килĕсене çӳресе вуласа парать. Уйахра е ахăнавĕçĕсене, ударниксене кĕнекесем килĕсене леçсе парать. Вулавçăсен йышне ӳстерес майпа канашлусем туса иртерет. М. Матвейăва йулташ колхозниксемпе пĕрле йаланах уйра пулать. Вĕсене вăл каннă вăхăтсенче тĕнчери ларутăрусем çинчен тата партипе правительствăн постановленийĕсене ăнлантарса парать. Хăйĕн пĕлӳне те хăпартать.

И. Табăв.

Вăрмар районĕнче тырпулсене пухса кĕртес ĕç мĕнле пыни тата тырă тăратмали плана мĕнле пурнăçа кӳртни çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулхи августăн 15-мĕшĕнче йышăннă постановлени

Вăрмар райĕçтăвком председателĕ Петров йулташ тырпулсене пухса кĕртес ĕç тата тырă тăратасси çинчен тунă доклада итленĕ хыççăн, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Вăрмар районĕнче тырпулсене пухса кĕртес ĕçпе тырă тăратасси пачах çителĕксĕр пыраççĕ, тесе палартать.

Район руководителĕсем (çĕрĕç пай пуçлăхĕ, райĕçтăвком председателĕ, МТС директăрĕ, Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн уполномоченнăйĕ) тырпулсене пухса кĕртес тата тырă тăратас ĕçсенче оперативлă йертсе пырас вырăнне пĕтĕм ĕçе хăй йуххипе йанă, колхозсенче ĕçсем мĕнле пыни çинчен пĕлмеççĕ тата ĕçсене йертсе пымаççĕ. Çавăн пирки те августăн 10-мĕшне кĕрхипе çурхи тырăсене 78 процент çеç пухса кĕртнĕ, 50 процент капана хывнă, 17 процент çеç çапнă.

Комбайнсемпе йапăх усă кураççĕ, авăн çапас ĕçе организацилемен, МТС тата колхозсен молотилкисенчен чылайĕшĕ пĕр сменăпа çеç ĕçлеççĕ. Çапла пулсан та çĕрĕç пай пуçлăхĕ тата МТС директăрĕ авăн çапас ĕçе йĕркелес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ.

Государствăна тырă тăратмали плана районĕпе пурĕ 32,8 процент тултарнă пулсан, натурплатă шучĕпе тырă тăратасси пачах çук 13 колхоза ку тарана çитиччĕнех МТС натурплатă тырри памали счота тăратман, натурплатă тăратас йенĕпе колхозсене тĕрĕслесе тăни çук.

Райĕçтăвком председателĕ, райçĕрĕç пай пуçлăхĕ, Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн уполномоченнăйĕ, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б) Парти Тĕп Комитечĕ 1938 çулти апрелĕн 19-мĕшĕнче „Йединоличниксен хуçалăхĕсем çине хунă налогсемпе ытти обйазатĕлствăсем çинчен" йышăннă постановленийе ăнланайман, йединоличниксен хуçалăхĕсем çине саккун тăрăх хунă обйазатĕлствăсене вăхăтра тултармала тăвас вырăнне, вырăнти парти тата совет органĕсем йединоличниксене государствă умĕнчи обйазатĕлствăсене тултарасран хăтăлмала тăваççĕ. Августăн 10 мĕшне тырă тăратмали плана йединоличниксем йенĕпе 1,9 процент çеç тултарнă, çав вăхăтрах колхозсем 44 процент тултарнă.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

1. Тырпулсене пухса кĕртес ĕçе çителĕксĕр йертсе пынăшăн, колхозсенче ĕçсем йепле пулса пынине пĕлменшĕн, вырнă тырра нумай вăхăт хушши капана хывмасăр тăратмала тунăшăн,—Вăрмар райçĕрĕç пай пуçлăхне Родионăв йулташа выгăвăр парас.

Родионăв йулташа районти çитменлĕхсене халех тӳрлетсе çитерме, тырпулсене пухса кĕртес ĕçе кĕске срукра тата тăкаксăр иртермеле туса организацилеме хушас.

2. Тырпулсене пухса кĕртес тата государствăна тырă тăратас ĕçри çитменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе районра халех конкретлă ĕçсем туса иртермесен, райĕçтăвком председателĕ Петров йулташа тата МТС директăрĕ Григорйĕв йулташа çирĕп ответ тыттарасси çинчен асăрхаттарас.

3. Райĕçтăвкомсене ПСК(б)П Обкомĕ кашни комбайн çумне районри активран çын çирĕплетмеле тесе йышăннă решенийе пурнăçа кĕртме, комбайн патĕнче ĕçлекенсен айăвĕле комбайнсем ĕçсĕр тăнине пĕтерме, комбайнсемпе ĕçлеме лаптăксем уйăрса пама тата комбайнсемпе ĕçлемели плана тултарма хушас.

МТС директăрĕсене тата райçĕрĕç пай пуçлăхĕсене Халăх Комиссарĕсен Совечĕ комбайн хыççăн улăмсене пухса пырассине тата пучахсене тураса тасатассине организацилеме хушать.

4. Райĕçтăвком руководителĕсене тата колхоз правленийĕсен председателĕсене кĕлтесене вăхăтра капана хывса çитерес ĕç çине уйрăмăнах хытă çаврăнса пăхма хушас; лаша вăйĕсене пăхса тухса, кĕрекн пуçлани чĕн лаша вăйĕпе кĕлтесене капана хывас ĕçре ытларах усă курмала туса; ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулти йайăнĕн 23-мĕшĕнче йышăннă постановленипе тырпулсене вырса пĕтернĕ хыççăн 10—15 кунран кайа йулмасăр кĕлтесене капана хывса çитермеле тесе кăтартса панине пурнăçа кĕртме хушас.

5. Авăн çапас ĕç çителĕксĕр пырать тесе шутласа, Халăх Комиссарĕсен Совечĕ райĕçтăвкомсене, райçĕрĕç пайĕсене, машинă-трактăрлă станцисене авăн çапас ĕçри çитменлĕхсене халех пĕтерме хушать. Молотилкăсене икĕ сменăпа ĕçлеттермеле, молотилкă талăкра 20 сехетрен кайа мар ĕçлемеле тумала, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Авăн çапнă çĕрте ĕçлекен машиниссене, трактăриссене, тырă виçекенсене тата колхозниксене ĕçшĕн тӳлесси çинчен" йышăннă постановленийе анлăн ăнлантарса парса, плана ытлашшипех тултарса пымала тума хушас.

МТС директăрĕсене Атăл тăрăхĕнчи Нимĕçсен АСС Республикинчен кӳрсе килнĕ молотилкăсене хăвăрт йĕркелесе ĕçе йама хушас.

6. Райĕçтăвкомсене, райçĕрĕç пайĕсене, машинă-трактăрлă станцисене тата Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн уполномоченнăйĕсене государствăна тырă тăратас ĕçе, уйрăмăнах натурплатă тыррине тăратас ĕçе хăвăртлатма хушас,—государствăна тырă тăратассипе натурплатă тыррине парас ĕçе уйăрмала мар.

„Йединоличниксем тĕлĕшпе государствăна хирĕçле тата колхоза хирĕçле практикăна пĕтерме хушас тата налогсем, тĕштырă тăратас тата аш-какай тăратас т. ыт. тĕлĕшпе государствă умĕнчи мĕн пур обйазатĕлствăсене йединоличниксен хуçалăхĕсем тĕрĕс тултарнине çирĕп асăрхаса пыма хушас".

7. МТС директăрĕсене 5 кун хушшинче колхозсен çуркуннехи ĕçсемшĕн натурплатă памали счотсене парса çитерме хушас. Малашне авăн çапнăшăн тата комбайнсемпе ĕçленĕшĕн счот тăратассине вăрăма йарса пымала мар тумала, колхозсем натурплатă тыррине турттарнине йалан тĕрĕслесе тămала.

8. Клешчсемпе кĕрешес ĕçе организацилес тĕлĕшне, Халăх Комиссарĕсен Совечĕ райĕçтăвкомсене тата çĕрĕç органĕсене дезинфекцилемен кивĕ итемсем çинче авăн çапма чарма хушать, тырă хатĕрлекен пунктсене клешчсем йернĕ тырă каймала мар тумала.

Хатĕрлев пунктĕнче тырă илмесĕр калле тавăрса йани пулсан, çавăншăн райĕçтăвкомсем, райçĕрĕç пайĕсем тата машинă-трактăрла станцисем ответ тытмала пулассине асăрхаттарас.

9. Пушарсем час-часах пулнине паларттса, Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Çĕрĕç Халăх Комиссариатне тата райĕçтăвкомсене çак çулти августăн 20-мĕшне çитиччен колхозсенче пушартан сыхланас ĕç мĕнле тăнине тĕрĕслесе тухма хушать. Колхоз итемĕ çинчи тата ампарсем патĕнчи хуралсене пăхса тухмала, хуралçăсене чи авăн колхозниксенчен тăратса пушартан сыхланас ĕçе кирлĕ пек йĕркелесе çитермеле.

10. Митков йулташа тĕштырă тăратас ĕçре практикăлă пулăшу пама Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн уполномоченнăйĕн аппаратĕнчен Вăрмар районне çын йама хушас.

11. Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн уполномоченнăйне Митков йулташа Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйне Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ларăвне мĕнле сăлтавпа килменнине пĕлсе взыскани пама хушас.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ А. СОМĂВ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхакан Н. ЖУКĂВ.

Государствăна аш-какай парас ĕçе хăвăртлатмала

Вăрмар. Районра государствăна аш-какай парасси чăтма çук начар пырать. Кăçал государствăна аш-какай памалли плана пайана пурĕ те 32 проц. çеç тултарнă.

Государствăна аш-какай парса татас ĕçре йалти активăн малта пымалла. Анчах та хăшпĕр йалсовет активĕсем хăйсем кайра пыраççĕ. Мăн Туркан йалсовет председателĕ Вертă Карчăкăй 1936 çулшăн пĕр килограм та аш-какай паман. Çавăн пекех Тĕмпĕкра Вороширлăв йачĕпе тăракан колхоз председателĕ Устинăв та государствăна виççĕмĕш квартăлшăн аш-какай парса татман. Çавăнпа та çитĕ Мăн Туркан йалсовечĕ государствăна аш-какай парассине кайра пырать.

Нурăс, Кăнашă, Иртеменкасси, Пăнапал, Уйăп йалсоветĕсем те аш-какай парассине начар ĕçлеççĕ.

Н. Ковлов.

ÇУНАТЛĂ ÇЫН

Пĕчĕкçĕ Вăчеслав çӳлĕ ту çинчен сасартăк сикнĕ те йарăнса вĕçнĕ, ăна кăвакарчăнсем те хăваласа çитеймен. Вĕçе-вĕçе сехри хăпнă, нийепле те чарăнайман. Вăл урайĕнче вăранса кайнă, пуçĕ ыратса сăрланă. Тĕлĕк аташтарнипе вăл койкă çинчен персе аннă иккен.

Тĕлĕкре кашни каçах вĕçнĕ, ăвăхран вăрансан, вĕçме тӳрĕ килмен. Йумахсенче етемсем çичĕ пĕлĕт çӳллĕш тĕнчене те çитсе курнă, çунатлă кĕмĕл те ылттăн урхамахсем такансен айĕнчен вут хĕм кăларса пынă. Халлап паттăрĕ Иван çичĕ пуçлă çĕленсемпе халран каймасăрах кĕрешнĕ. Вăчеслав Шупашкар урамне тухнă, анчах халлапри пекех йапаласене тĕл пулман. Пасар патĕнче йупасенчен кăкарнă лашасем утă каллеме, вĕсен çуначĕ курăнман. Пĕчĕкçĕ Вăчеслав шалтах аптранă—вĕçесси килнĕ. Вăл 19.7 çулта çуралнă. Пĕтĕм тĕнчене чĕтретнĕ тата етемлĕх историйĕнче чи малтан халăхсене телей панă октябĕр тапăшĕ. 17 çулта пуçланнă пролетари революцийĕ выççисене çăкăр, пӳртсĕррисене—пӳрт, çунатсăррисене—çунат панĕ. Вăчеслав мĕн пĕчĕкрененех Шупашкар çинчи пĕлĕтсем çине пăхнă. Пĕлĕте сăнанă чух, мĕн çинчен шухăшлатăн, çавăн пекех курăнаççĕ. Калăпăр, санăн тăвăнти тахçанах курнă кăтра йулташу — вара пĕлĕтсем кăтра çын пекех курăнаççĕ. Вăчеслава пĕлĕтсем çунатлă çын ишнĕ пек курăннă.

Вăчеслав тин вĕренме тытăнсанах, самолётсем çинчи вулаве пĕлме хапсăннă. Мĕнле тăрăшсан та, библиотекăсене чупсан та, — тавçăрса илме йăвăртарах пулнă. Пĕрре шăрăх кун Атăл çинче куçа кăшт сисĕнекен кăвак тĕтре тăнă. Вăчеслав икĕ аллипе те хăлăçланса ишнĕ чух, хум шавĕпе сас илтĕнмен, вăл ки ренекен шыв çинче хăвăрт иртекен самолёт мĕлкине курнă та сасартăках савăнăç та кăмăл хуçăлни те пĕрлешнĕ. Çапла вара ишсе пынă çĕртех шухăшланă, Атăл вăта çĕрнех пырса çитсен хăй шăнние, вăйĕ чакнине сиссе илнĕ. Кайалла чыхăнă чыхăнă кăна ишсе тухнă Кăмăл хуçăлмалăх ĕнтĕ, çӳлте çын вĕçтĕр, пĕчĕкçĕ Вăчеславăн шывра кăна ишме тӳрĕ килет. Вăл васкаса килне таврăннă, пӳрте кĕнĕ—пӳрт тăвăр пек, килкартне тухсан та — çаплах. Çĕре ларнă, хăйăр çинче темĕскерле ăнланса илмеле мар çунатсем ӳкерме тытăннă.

Амăшĕ шухăша кайнă ывăлĕ çине пăхса тăнă хыççăн:

— Мĕн тăватăн, ывăлăм? — тенĕ.

— Самолёт ӳкеретĕп.

— Мĕн тума вăл сана?

— Вĕçсе килет, анне, — тенĕ Вăчеслав.

— Ан васка, вĕçĕн-ха.

Вăчеслав хуйха ӳкнĕ, унăн тепĕр ирхинечченех кашта çӳллĕш ӳсесси, хăвăртрах çӳлтен çӳле вĕçсе хăпарасси канăç паман. Каллех çӳлеле тинкерсе пăхнă, тем пысăкăш хĕрлĕхен кайăк ыйăн кăмăллăн йарăннă, унăн мĕлки çуртсем хушшинче ванса шунă тата Вăчеслав питне те лексе иртнĕ.

Хавасăлăх та шухă ачалăх! Кам кăна пиртен кăвакарчăнсем çине пăхман ши, кам кăна ывăçĕнчен вĕсене тулă сапа-сапа паман ши? Ачасем вĕçен кайăксене кăмăлтан тавралăха алтупанĕ çинчи пек курас килет. Ачасем хăйсем вĕçме пултарайманнипе тарăхса, хăй аллипе тунă хутçĕлене çӳлте йарăнтарса çерем тăрăх чупнине часчасах курма пулать. Вĕçме тăрăшни хăшпĕр чухне хуйхăлăн вĕçленни те пулать. Пĕр ача кайăксене пăхапăха кĕвĕçнĕ хыççăн, çӳхе хăмасенчен çунатсем туса аллисем çумне çыхнă. Вара пӳрт тăррине хăпарнă, чылай вăхăт аллисемпе хăлаçланнă хыççăн, сикнĕ. Унăн телейне кура урисем те аллисем те хуçăлман—амăшĕ хулăпа хĕртнипе вĕçев историйĕ иртнĕ. Ку вĕçев тени Пушкăрт республикĕнче Мелеспуç йалĕнче пулса иртнĕ. Епĕ унпа калаçнă чух, вăл кăвак сухаллă ларма-тăма пĕлмен-канăçсăр кăмăллă старикчĕ. Унăн йачĕ Михайла. Вăл çапла каласа панăччĕ:

— Манăн ĕмĕрĕм вăрăм пек пулсан та вăл кĕске Епĕ пĕр йеннеле Белебейе çитиччен, тепĕр йеннеле Хушăлка йалне çитиччен кайнă, урăх ним те курман. Хамăр йалтисем пурте тенĕ пек манран кулатчĕç, Йывăç çунат—тетчĕç. Пĕчĕк чухне пӳрт çинчен сикни пулнăччĕ çав. Ĕмĕр ĕмĕр вĕçес килчĕ, çапах та вĕçсе пулмарĕ. Час часах Епху хули йеннеле, йе унтан Абдулин йеннеле йероплансем вĕçнине куратăп та—хамăн ĕмĕр иртсе кайнишĕн кăмăл хуçăлать.

Михайла мучи калавĕ ĕлĕк, пуснăр саманинче, çамрăк ĕмĕчĕ тăлăннине кăтартса парать. Вăл вĕçес тенĕ, — кĕпертсе çитиччен вĕçме мар, ĕмĕрне çăпата туса иртернĕ. Михайла мучи пек хĕвхур кăйăнче лапчăннă çынсем пусмăрлă хура саманара сахал мар, пур çамрăксем те çапла пулнă. Вĕсем хăйсен пултаруйăнне тата хăватне кăтартайман. Халăхи çамрăксем хăйсем йепле шухăш тытнă,—çавна пурнăçра тума пултараççĕ. Вăчеслав вĕçесшĕн пулнă, ăна çунат хушма пур йенчен те пулăшу панă, унăн хавасăлăхне хĕрӳлетсе пынă.

Вăчеслав Бронникăв кăвакарчăнсем усранă. Кăвакарчăнсем ăна йулташла пăхăннă. Вĕсем вĕçнĕ, анчах Вăчеслав шăхăрсанах кайала çурт çине таврăннă. Вăчеслав хăй вĕçесшĕн çунни пирки куллĕнех тенĕ пек авиомоделсем туса аташать. Ку ĕç питĕ ăнăçлă пырать, хăй вĕреннĕ чухнех вăл Горький йачĕпе тăракан Шупашкарти вăтам шкулта авиамоделсен кружокне йертсе пырать. Вăл 1934 çулта планериссен кружокне вĕренме кĕрет, çав çулах икĕ сыпăкне те лайăх вĕренсе пĕтерет, инструктăр йатне илет. Вăчеслав Бронникăв хăй мĕн пĕлнине йулташĕсене, çамрăксене пама пĕтĕм вăйне хурать. Авиомоделисен пĕтĕм республикри ĕçне йертсе пырать. Кăçал, 1938 çулта, вăл авиаци шкулне пĕтерсенех, хăй çуралнă çĕршывне, Шупашкара таврăнать те тӳрех çамрăксене авиаци ĕçне вĕрентме тытăнать, кĕске вăхăтрах 13 çынна вĕрентсе кăларать.

Вăчеслав Бронникăв сывлăшра нумай вĕçнĕ çамрăк çын, халиччен пĕр авари те туман. Пĕрре вăл планĕрпа вĕçме хăпарнă, самолёт пĕтĕмпе те 50 метр çӳллĕш çитет те, мотор хирĕçме тытăнать. Вăчеслав планĕрпа вĕçертсе йарать те, вăрман çине чипер çеç анса ларать.

Вăчеслав Бронникăва пирĕн хавасăлă пурнăç çунат панă. Ун пек çунатлă çамрăксем пирĕн çĕршывра пиншерĕн ӳсеççĕ. Вăл çунатлă çамрăксем мухтавлă тăван çĕршыва сыхлаççĕ. Тискер фашиссем пире тапăнас пулсан, вĕсем пирĕн хурчăкасем умĕнче вут хыпнă пек ӳкĕç. Вĕсен айăне çалсем вĕçсе салатĕç. Ухсай Йаккăв.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Куславкка райкомĕ ПСК(б)П Обкомĕн решенине мĕнле пурнăçлать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ республикăри партилĕ пропаганда ĕçне лайăхлатасси çинчен татăклă решени йышăннă хыççăн, Куславкка райкомĕ партилĕ пропаганда ĕçне лайăхлатни палăрать. Районти коммунистсене пурне те парти вĕрентĕвне хутшăнтарнă. Кружоксене райком çекретарĕсем (Липатăв, Желтухин) инструкторсем т. ыт. йертсе пыраççĕ.

Парти историне Ленин—Сталин произведенийĕсем тăрăх вĕренекен комбинатри кружока парткабинет пуçлăхĕ Руçин йулташ йертсе пырать. Кружока 15 çын тăтăшах çÿреççĕ. Занятисем уйăхра 3 хут план тăрăх пĕр сиктермесĕр пулса иртеççĕ. Кунта вĕренÿ пахалăхĕ те ÿссех пырать. Руçин йулташ занятисенче парти историн альбомĕпе, географи картисемпе усă курать. Вĕренекенсенчен чылайĕшĕ килте вуласа, хатĕрленсе пыраççĕ. Çавăнпа та кунта занятисем активлă иртеççĕ. Гришин, Новикăв, Михейĕв, Краличкин йулташсем яланах занятисене лайăх хатĕрленсе пыраççĕ. Вĕсен конспектсем те пур.

Парти историне вĕренмели Карачри кружокра та занятисем пĕр сиктермесĕр пулса пыраççĕ. Вĕренекенсем пурте ăмарту договăрĕсем тунă. Вĕсенчен чылайĕшĕ хăйсен обязательствисене пурнăçласа пыраççĕ. С. Федăрăвă, И. Изоçимăвă йулташсем пĕр занятирен те йулман. Вĕсем килте вуласа хатĕрленеççĕ, ăнланман ыйтусене Йефремăв пропагандисран ыйтса пĕлеççĕ.

Йулашки вăхăтра каçхи партшкул та лайăхрах ĕçлеме пуçларĕ. Кунта 28 çын вĕренет. Ийуньуйăхĕнчен вара 70 сехете йахăн вĕреннĕ.

Çапах та чылай кружоксенче парти вĕренĕвĕ çителĕксĕр пырать.

Пар и историне вĕренмели Йелчĕкри кружока ПСК(б)П Обкомĕ кăтартса панă пек урăхлатса çĕнетмен. Кружока 12 çын 8 йалтан вĕренме çÿреççĕ. Темшер, Метен йалĕнчи вĕренекенсен 5—6 çухрăма занятисене çÿремеле, кружока вĕренекенсен пĕлĕвĕсене шута илмесĕр комплектланă. Руководителсем пĕрмай улшăнса тăраççĕ. Малтанхи вăхăтра Çидоркин руководитĕл пулса ĕçленĕ, кайарах Огурцов, халĕ Коньков йулташ ĕçлет. Вĕренÿ пахалахĕ начар. Вĕренекенсем темăсене ăнланман пирки Коньков йулташ парти историне тепĕр хут пĕрремĕш темăран вĕрентме тытаннă.

Парти историне вĕренмели Йангильдиври кружокра та занятисем час-часах пулмаççĕ. Кружок руководителĕ Петров йулташ миçе занятри пулни çинчен хăй те калаца пама пултараймасть. Кружокра вĕренекен Мухамедçанăв йулташ та йулашки занятие хăçан пулнине, мĕнле темă вĕреннине астăваймасть. Парти вĕрентĕвĕ çителĕксĕр пыни ПСК(б)П райкомĕ кирлĕ пек йертсе пыманнинчен килнĕ. ПСК(б)П райкомĕн культпроп пайĕ парти вĕрентĕвне йертсе пыма пăрахнă. Культпроп пайĕн малтанхи пуçлăхне Матросăв йулташа райçĕрес пайне йанă. Çĕнĕ пуçлах ĕçлеме тытăнман. Районри хаçат та парти вĕрентĕвĕнчи çитменлĕхсемпе кĕрешсе пымасть; лайăх ĕçлекен кружоксен опычĕсене çутатса памасть. Ийунь уйăхĕнчен вара парти вĕрентĕвĕ çинчен пĕтĕмпе те икĕ заметкă çеç пичетленĕ. ПСК(б)П Тĕпкомĕ кăшни хаçатрах „Парти пурнăçĕ“ пайне организацилеме кăтартса панине райхаçат редакторĕ ку таранччен те ăнланса илмен.

Районри парткабинет ĕçĕсем

Парткабинет пропагандиссене куллĕнхи ĕçре пулăшса вĕрентсе пырас тата халăх хушшинче политикăлă агитаци организацилес тĕлĕшпе чылай çитĕнÿсем тунă. Парткабинет пропагандиссене, агитаторсене тата районри партактива вĕренÿре пулăшса пыни РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйланă чухне пит уççăн курăнчĕ.

Парткабинет литературă тĕлĕшпе пуйанлансах пырать. Кăçалхи йанварĕн 1-мĕш тĕлне 4336 кĕнеке анчах пулнă пулсан, хальхи вăхăтра 5400 кĕнекене çитнĕ. 1064 кĕнеке хутшăннă.

Районри парткабинет кĕнекесем, хаçат-журналсем тата вĕреннĕ чухне кирлĕ пособисем çителĕклĕ таран илнĕ.

Пропагандиссемпе агитатăрсене тата коммуниссене вĕренÿре пулăшас тесе, парткабинет выставкăсем туса иртерет. Парткабинетрах тĕне хирĕç кĕтес пур. Кунта тĕрлĕ плакатсемпе кĕнекесем. Партипе правительствă решенийĕсене тата çавăн пек пысăк событисем çинчен хаçатра тухнă материалсене касса илсе пĕр папкă тунă. Çакăн пек туни ĕçре нумай пулăшать, кирлĕ материалсем яланах алă айĕнче пулаççĕ.

Парти вĕренĕвне пулăшса пырас тĕлĕшпе парткабинет пысăк ĕç тунă. Парти вĕренĕвĕнче ĕçлекен пропагандиссемпе уйрăм консультацисем 108 хут туса иртернĕ.

Çакăнпа пĕрлех пропагандиссем занятие вăхăтĕнчех консультацисем, пулăшусем илсе пынă. 6 уйăхра 65 консультаци иртернĕ. Йефремăв, Коньков, Толстов, Желтухин пропагандиссем парткабинетпа тачă çыхăну тытса ĕçлесе пыраççĕ. Хайсем ăнланайман ыйтусемпе пĕрмайах консультацисенче пулаççĕ. Паллах ĕнтĕ, кун пек туни вĕсене ĕçре питĕ нумай пулăшать.

К.

Куславкка р.

Епĕр тăван çĕршыва сыхлама хатĕр

Илемлĕ йăвăççем хушшинче—красноармейĕцсен клубĕ. Тенкелсем çинче красноармейĕцсем, командирсем, политруксем, хĕрарăмсем ларассĕ.

Трибунă çинче çамрăк лейтенант аллисемпе хĕвелтухăçнеле кăтартса хыттăн калать:

— Епĕр, Хĕрлĕ Çар бойецĕсем, командирсем, пайанах, çак сехетрех тăшмана çĕмĕрсе тăкма хатĕр. Пирĕн бойецсем хăйсен Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи йулташĕсем пекех хăйсен паттăрлăхĕпе хăйулăхне кăтартрĕç. Пирĕн йуратнă Нарком Совет Сойузĕн пĕрремĕш маршалĕ Ворошилăв йулташ приказ çеç патăр, епĕр чикĕне тухса кайма хатĕр.

Красноармейĕц артиллерист çапла калать:

— Пайан çеç епĕр артиллери орудийĕсенчен петĕмĕр. Персе отличнăран та пахăрах хак илтĕмĕр. Кирлĕ пулсан пирĕн орудисем хĕвелтухăçне те, хĕвеланăçне те, кăнтăра та, çурçĕре те—пур çĕре те кайма хатĕр. Пирĕншĕн кашни вершук совет çĕрĕ хаклă, епĕр хаьйăрăн çĕре никама та пĕр вершук та парас çук!

Красноармейĕцсем вĕренÿ ĕçне татах лайăхлатаççĕ, вĕсем лайăхрах пересшĕн, тактикă вĕренÿне лайăхрах иртересшĕн, большевикла сыхăлăха хăпартассишĕн кĕрешеççĕ.

Çĕршыва сыхлама Хĕрлĕ Çарпа пĕрлех пĕтĕм халăх хатĕр тăрать. Хулара предприйатисенчи рабочисем, работницăсем винтовкăсенчен пеме вĕренеççĕ, походсем туса иртереççĕ. Çамрăксем çартри комсомолĕцсемпе пĕрле колхозсене кайаççĕ, унта занятисем туса иртереççĕ, пиншер çынсем 3—5 сехет хушши противогазсемпе çÿреççĕ.

Мускав хули çĕршыв çинчен, Сталин çинчен йурлать:

— Если завтра война,
Если завтра в поход,
Будь сегодня
К походу готов.

Иев. Йени.

Тăшмана хĕвелтухăçĕнче те, хĕвеланăçĕнче те çапса аркататпăр

Пирĕн совет чиккисене никам та пырса тĕкĕнме пултараймасть. Вĕсене çирĕп çăрапа питĕрсе илнĕ, вĕсене пĕтĕм совет халăхĕ хÿтлесе тăрать. Пирĕн Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ йалавлă фронт бойецĕсемпе командирĕсем совет çĕрĕ çине тапăнса кĕнĕ Йапони империалисĕсене тивĕçлĕ урок туйантарчĕç.

Епĕр те—хĕвеланăç чиккинче тăракан бойецсем, кирек хăш йенчен сĕтĕрĕнсе килекен тăшмана та кирек хăш минутра та çапса аркатма хатĕр тăратпăр. Сталин йулташ каланине епĕр лайăх астăватпăр: „Епĕр миршĕн тăратпăр тата мир ĕçĕшĕн ĕçлетпĕр. Анчах епĕр пире йунанисенчен хăрамастпăр, вăрçă чĕртекенсем çапни çине çапнипех ответлеме хатĕр тăратпăр“. Фашисла агрессăрсем вăрçăлă сойуза—Берлин—Рим—Токио текен блока пĕрлешрĕç. Вĕсем çĕнĕ тĕнче вăрçине пуçласа йамо, чи малтанах Совет Сойузĕ çине тапăнма хатĕрленеççĕ. Анчах пирĕн 170 мĕлйунлă совет халăхĕ, нимĕнле „ăнсăртлăх“ та кĕтмен çĕртен килсе ан тивтĕр тесе, йаланах мобилизацилĕ хатĕр тăрать. Ырай вăрçă-мĕн пулас пулсан, пирĕн никам та нихăçан та çĕнтерме пултарайман Хĕрлĕ Çар тата пĕтĕм совет халăхĕ алла хăçпăшал тытса тăван çĕршыва хÿтлеме тухĕç те, тăшмана çĕр çинче те, сывлăшра та, шыв çинче те—хĕвелтухăçĕнче те, хĕвеланăçĕнче те çĕмĕрсе тăкĕç.

Епĕр, пулас кĕçĕн командирсем, тăван çĕршыв умĕнче çакăн пек тупа тăватпăр: çар техникине тата политикăна вĕренессине темиçе хут ÿстеретпĕр, Ленинла-Сталинла комсомол XX çул тултарнă йубилейе пысăк кăтартусемпе кĕтсе илетпĕр.

Курсант И. Йегорăв.

ПРИЗЫВ УМĔН

Чи пысăк хисеп

Епĕ Тăвай районĕнчи допризывник-комсомолĕц, кăçал Хĕрлĕ Çара кайма призыва кĕретĕп. Призыв кунне епĕ нумайранпах кĕтнĕ. Хĕрлĕ Çар ретне тăрса тăван çĕршыва сыхласси вăл—ĕççынни çамрăкĕсен хисеплĕ ĕçĕ.

Епĕ Осоавиахим членĕ. Осоавиахимăн 12-мĕш лоторей билетне 20 тенкĕлĕх илтĕм, çĕнĕ займа пĕр уйăх ĕç укçи чухлĕ çырăнтăм. Кăçал çу вăхăтĕнче Хĕрлĕ Çара кайма лайăх хатĕрлентĕм. Ворошилăвла тĕл перекенсен значокне илтĕм. ПВХО нормине патăм.

Епĕ хăть те хăш вăхăтра та тăван çĕршыва сыхлама кайма хатĕр. Допризывник А. Пикишкин.

Лайăх хатĕрленетĕп

Епĕ кăçал çентабĕр уйăхĕнче Хĕрлĕ Çар ретне кайма призыва кĕретĕп. Ку куна пысăк хавасланăхпа кĕтетĕп. Хĕрлĕ Çар ретне тăрасси—вăл маншăн чи пысăк та хисеплĕ тивĕçлĕх.

Призыв умĕнхи вĕренÿре „отличнă“ паллăпа вĕренсе тухрăм. ГТО, ГСО, ПВХО нормисене парса тата ворошиловла тĕл персе значоксем илтĕм. Çуллахи вăхăтра хамăн сывлăха çирĕплетрĕм. Халĕ кашни кунах хаçат-журналсем вуласа пĕлÿлĕхе ÿстеретĕп. Йалсовет ĕçне хутшăнатăп. Колхозниксемпе йединоличниксене тĕнчери лару-тăру тата Совет Сойузĕн çитенĕвĕсем çинчен ăнлантаратăп.

Допризывник Н. Павлăв.

Вăрмар р., Тÿлкой йалĕ.

Стахановла йухăм пуçланни виçĕ çул тултарас умĕн

Стахановĕц-активист

Нумай çулсем иртнĕ ку ĕмĕт Михаил Гальцĕвăн ăсташĕнче çуралнăранпа. Вунултă çул кайарах, сакăр çулта чухне, Сĕнтĕрвăрринчи ачасен çуртĕнче пурăнма тытăнсанах, Михаил саватра ĕçлекен квалификацилĕ рабочи пулма ĕмĕт тытнă. Çавăнтанпа унăн вĕренĕвĕ, йăли, пултарулăхĕ йалан профессĕ илес йенĕпе аталанса пынă. Ачасен çуртĕнче пурăннă тăхăр çул хушшинче 5-мĕш, 6-мĕш, 7-мĕш классенче вĕреннĕ вăхăтра та Михаил пуринчен ытларах техникăпа, механикăпа тата физикăпа интересленнĕ. Ачасен çуртĕнчен тухсан та хăйĕн йăлара çирĕпленнĕ йаланхи ĕмĕтне пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе çулсерен утăм хыççăн утăм туса пынă. 1936 çулта Михаил Канашри вакунсем йусакан савата кĕрет. Саватра чылай вăхăт хушши ĕçленĕ хыççăн токăрсем хатĕрлекен курсра вĕренме тытăнать. Çакăнта вăл хăйĕн нумай çулсем кайала çуралнă тĕллевĕ пурнăça кĕнине курать, унăн профессĕ илес ĕмĕт тÿррĕмĕн пурнăçа кĕме тытăнать.

Халĕ Михаил Гальцĕв токăр. Анчах токăр теннипех унăн ĕçĕсемпе пурнăçĕн пĕтĕм пысăккăшне кăтартса пама май çук. Мĕншĕн тесен Михаил Гальцĕв токăр çеç мар, вăл токăр-стахановĕц, стахановĕц-активист.

Сменă ĕçлеме тытăниччен икĕ-виçĕ минут йулнă. Ку вăхăтра Михаил Гальцĕв станока тасатса, инструментсене йĕркелесе хурса пĕтерет. Ĕçлеме тытăнасси çинчен пĕлтерсе савăтăн гудокĕ йанрама тытăннипе пĕрлех унăн станокĕ пĕтĕм вăйĕпе кĕрлеме тытăнать. Михаил ĕç йĕркине çирĕппĕн пăхăнса пырса, детальсене пĕрин хыççăн теприне вĕçĕмсĕр ĕç ытакан станок çине парса тăрать. Ĕç вăхăтĕнче сайа каймасть. Кашни минут усă парать. Çапла ĕçленипе Михаил куллен хăйĕн нормине ытлашшипех тултарса пырать.

Сменă ĕç пĕтерне. Рабочисенчен чылайĕшĕсем станокĕсене тасатса йĕркелесе цехран саланма пуçланă. Анчах Михаил Гальцĕв цехра. Кун каçиччен пухăннă ыйтусене татса парас тĕлĕшпе ĕçлет. Профсойузăн цехри комитечĕн ĕçне тăвать. Стена хаçачĕ кăларма хатĕрленет. Вăл профсойуз комитечĕн, стена хаçат редколлегин членĕ.

Каçхине те Михаил Гальцĕв вăхăчĕ ахаль иртмест. Михаил производствăран татăлмасăр 8-мĕш класра вĕренет. Çав вăхăтрах йулташĕсене пулăшать.

Стахановла ĕç Михаил Гальцĕва тулли культуралă пурнăç туса пачĕ. Тутла апат-çимĕç, илемлĕ тумтирсем, кĕнекесем, хаçат-журналсем—Михаилшăн çĕнĕ йапала мар, вĕсем унăн куллен пурнăçĕнче пур.

М. Т.

Волкăв бригади мала тухать

Стахановла йухăм пуçланни виçĕ çул тултарнине хатĕрленнĕ май, Шупашкарти çĕнĕ стройкăра стахановĕцсен хисепĕ ÿссех пырать. Стахановла тухăçлăхпа уйрăм рабочисем çеç мар, пĕтĕм бригадăсем ĕçлеме тытăнчĕç. Волкăв йулташ йертсе пыракан платниксен бригади августăн 15-мĕшĕнче нормăна 232 процент тултарнă. Ку кун бригадă членĕсем кашни 14-шер тенкĕ ĕçлесе илнĕ.

Кунашкал ĕçлекен бригадăсем сахал мар. Ромашкин йулташ бригади те нормăна 200 процент ытла тултарса пырать. Августăн 16-мĕшĕнче уйрăм бригадăсем çапла ĕçленĕ: нормăна Матвейĕв бригади—164 процент, Шумилăв бригади—133 процент, Антонăв бригади—128 процент, Мочалав бригади 135 процент тултарнă. Вăл бригадăсенче ĕçлекенсем кашни 12 тенкĕрен кайа мар ĕçлесе илнĕ.

В. Д.

Ăмăртса ĕçленипе

Ишекри „Большевик“ промысла ертелĕнчи (Ишлей р.) аластаççем кашни пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Ăмăртса ĕçленипе вĕсем йулашки вăхăтра кунран-кун ÿсĕмсем туса пыраççĕ. Аластаççен хушшинче стахановла ĕçлекенсен хисепĕ йалан ÿсет.

Казанникăвă, Крылов, Кольцов тата Васнлйĕвă йулташсем кашни уйăхра 400-шер чăпта çапаççĕ. Кунсерен вĕсем 15 чăпта вырăнне 20 чăптаран ытларах çапаççĕ. Стахановĕцсем тăрăшнипе пĕремĕшпе иккĕмĕш квартăлсенче кашинче 2325 чăпта-çапса кăларнă. Халĕ ертел членĕсем виççĕмĕш квартăл планне срукчен тултарассишĕн тата продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн тăрăшаççĕ.

А. Наумăв.

Ĕçри çавранăçусăрлăх

ССР Сойузĕн правительстви Государствăн 1938 çулхи Шалти Выигрышлă займне кăларма тата ăна халăх хушшинче ирĕклĕн сутма йышăннăранпа виçĕ уйăх çурă иртрĕ. Августăн 10-мĕшĕнче çак займăн пĕрремĕш выльăвĕ пулчĕ. Ку тĕле Шупашкарти Тĕп перекет касси 49 пин, Канашри—19 пин, Улатăрти—7 пин, Çĕмĕрлери перекет касси 4 пин тенкĕлĕх çак займа сутнă.

Ĕççыннисем ку займа та хавасланасах илеççĕ. Анчах та Государствă кредичĕпе перекет кассисен ЧАССР Управленийĕ çак займа сарас ĕçре хăй кансĕрлет, вырăнти перекет кассисене Государствăн 1938 çулхи Шалти Выигрышлă заём облигацисене кирлĕ таран парса тăмасть.

Н. Филиппăв.

Иван Рахилло

ЧУКĂН СЕХЕТ

(КАЛАВ)

Кун пек чаплă вакун çине старик хăйĕн ĕмĕрĕнче пĕрремĕш хут ларнă. Чÿрече каррисене сирчĕ те вăл кантăк витĕр тулала пăхса пыма пуçларĕ: пуйăс хытăран хытă кайса пырать, стрелкăсен сигнал çуттисем йăлтăрт та йăлтăрт сике-сике йулчĕç, вакзал урамĕнчи хуларсен вăрăм речĕ шуса иртнĕ хыççăн станцă тĕлĕнче вĕлĕте ÿкнĕ çутă куçран çухалчĕ. Сасартăк сĕм тĕттĕм каç хупăрласа илчĕ. Старик, Силă Иванăвич, çак тĕттĕмлĕхре хăйсен йалĕн мĕлкисене курас тесе пиченсех тинкерсе пăхрĕ, нимĕн те кураймарĕ, вара чĕлĕм мăкăрлантарса йачĕ те, хăйпе йунашар вырăн çинче çывăрса пыракан çынна сăнама пуçларĕ: çывăрса ăшăрхана шурă куç харшилĕ çамрăк летчик пырсан-пырсан пĕр йархана гимнастеркин çулахай кĕсйине кăпах йарса илет те, кăкăрĕнчен чĕрине туртса кăларас пек, аллине сасартăк айкинелле ыткăнтарса йарать. Тинкерсе сăнать старик. Йулашкинчен лапка çине хăпарса выртрĕ те куç илмесĕр пăхса пыма пуçларĕ, кăшт сĕмпай хыççăнах çакна асăрхарĕ—летчикăн алли умри кĕсйе патне шăп кăна пуйăс карт сиктернĕ хушăра пыра-пыра тивет.

„Сехетне кăларса илесрен шиклеет“—шухăшларĕ Силă Иванăвич, çавăнтах тем çса кашĕ пек пулса, хăйĕн сехетне хыпашласа пăхрĕ те кĕсйинчен кăларчĕ. Сехечĕ çивĕтен пăхсан хупăнмалла мар, ÿхнĕ тăрăхан чукăн сехет кăна. Анчах сехет шухăшĕ Силă Иванăвич пуçне ахалех мар чи малтан пырса кĕчĕ, ку сехет уншăн ыкçаран та хаклă тăрать. Ана вăл хăйĕн виннĕ тăван пиччĕшне—Константин Иванăвичĕ асăлтерекен хаклăран та хаклă йапала вырăнне сыхласа усрать.

Константин Иванăвича вăл сехете пĕр матрос парнелесе панă пулнă, матросĕ хăй 1905-мĕш çулта баррикадăсем çинче çапăçнă чух вилсе выртнă. Константин вăл вăхăтра, 17 çулхи çамрăк каччă, портра грузчик пулса ĕçленĕ. Шăп çавăнта ĕнтĕ, портра ĕçленĕ çĕрте, вăл пĕр матрос-большевикпа туслашса кайнă та, çав матроспа пĕрлех баррикадăсем çинче çапăçнă, анчах матрос хăтăлайман, ăна пуля çитсе тивнĕ. Вилес умĕн матрос сехете Константин Иванăвича пилле се, ăна хăйсен паттăр та кĕрешÿлĕ туслăхне асăнмалăх сыхласа усрама хушнă. Йе Константин Иванăвич хăй вилес пулсан, çав сехете хăйĕн чи шанчăклă та тивĕçлĕ йулташне парса хăварма каланă.

„Ку сехете мана,—тенĕ матрос,—Хура тинĕс флотĕнче восстани çĕклекенĕ лейтенант Шмидт хăй парнелесе пачĕ“... Каланă та çапла, вилнĕ.

Çавăнтан вара Константин пачах çуттанă, сайра хутра çеç ямăшне курма тесе килне вăрттăн пырса кайнă—ытла та йуратнă ăна ямăшĕ. Хăрушă ĕçре пулнă вăл: йут çĕршывран хĕç-пăшалсем кÿрсе тăнă: тăвата хутчен ăна çĕпĕре катăргăна йанă, тăвата хутчен тарнă вăл унтан.

Пĕррехинче çапла, никам кĕтмен çĕртен, Силă Иванăвичсем патне пысăк сухаллă палламан салтак пырса кĕнĕ. Салтак хайхи чукун сехете илсе пынă та, Константин Иванăвич Зимний дворецă илнĕ чух çапăçура вилсе выртни çинчен каласа панă. Константин дворецăн хÿми урлă пуринчен малтан каçса кĕрсе, йункĕрсен пулĕсем шăхăрса тăнă хушăрах хапкана уçса йанă. Пуля ăна çурăмĕнчен лекнĕ. Константин хăйĕн йулташĕсен алли çинче вилсе кайнă.

Çемйере сехете куç пек сыхласа усранă.

... Силă Иванăвич аллине кĕсйи çине хурса, ывăç тупанĕ айĕнче сехет хăвăрттăн шакканине туйсах канăççăр тĕлĕрÿпе çывăрса кайрĕ.

Вăранасса вăл сасартăк шăв пуланипе вăранчĕ. Пуйăс тăрать. Чÿрече витĕр шупка çутă кĕрет. Летчик аттисене тăхăнса ларать.

— А епĕ ывăлă патне кайатăп,—терĕ кĕтмен çĕртен Силă Иванăвич.

— Мускавра-ыи вара сан ывăлу?

— Вăл та сан пекех—вĕçет. Горбатко.

— Горбатков ашшĕ пултăна вара ес? Сан çинчен унта пĕтĕм сехадрильă пĕлет.

„— Не тата, тупрăн... Епĕ çакна кала-ха: мĕншĕн çĕркуте ывăлăр кĕсйине йара-йара тытса килтĕн?

— Каллех тытнă иккен. Рефлекс теççĕ ăна, асатте. Хăнăху. Акă, куратна çак значока? Виççĕр хут парашютпа сикнĕ... Кирек хăçан та çавăн пек епĕ: кăшт сиккине туйсанах алла парашют уçки патне йаратăп, çывăрнă чухне те çавах...

— Кала-ха тархасшăн, пирĕн Кĕркури мĕнле пурăнать?

— Сирĕн Кĕркури-и? Вăл, ĕнтĕ çав тери чапа тухрĕ, патне те ан пыр!

Силă Иванăвич хăйĕн ывăлĕ чапа тухнине, ăна Кремĕлте чĕнсе илсе пысăк наградă—орден панине хăй те пĕлет, анчах старикшĕн ку йапала темле ĕненме çук пек туйăнать, хаçатсенче унăн ывăлĕ çинчен мар такам урăх çын çинчен çырнă пек туйăнать ăна. Ултă çул кайарах Кĕркурине комсомол йеннĕпе командировкă парса пилотсен шкулне вĕренме йанă, ултă çул иртнĕ, анчах çак ултă çул хушшинче ашшĕпе ывăлĕ пĕрре те курнăçса курман.

Пуйăс Мускава çитнĕ çĕре каç пулса килчĕ. Ывăлĕ старике перрон çинче кĕтсе илчĕ—тĕлĕнсе халтан кайрĕ старик, ахăр парашютис пулман пулсан, вăл Кĕркурине палламан та пулĕччĕ, Кĕркури кашта пек ÿссе, çитĕнсе кайнă. Ашшĕпе ывăлĕ ыталашса чуптусе илчĕç. Старик Кĕркурин сассине пĕрре илтсен, вăл çавранкаланиçене, унăн уттине пĕрре пăхсах ывăлĕ йĕркелĕ те чăн-чăн çын пулса çитнине курчĕ. „Çын пулнă“ шухăшларĕ старик.

— Такçипе кайма тивет, хамăн машинăпа йапаласем илме йатăм.

Силă Иванăвич Мускав хулине, магазинсене, йĕртен-çÿрен халăха курса савăнать.

Пĕр лайăх тĕкăрлĕкре темиçе кутлă вĕрçĕнĕ çурт ларать. „Пуйăс пуранаççĕ“.

Лифт çине кĕрсе тăрсан, старик-шахтĕр çăмăлланса кайрĕ:

— Ну-ка, çил пек вĕçтерсе хăпарт,—терĕ.

Киле кĕчĕç. Кĕркури шинелне хывса çаксан, Силă Иванăвич ывăлĕн кăкăрĕ çинчи ордена тинех хăй куçĕпе хăй курчĕ. Унтан, кинĕпе паллашнă хыççăн, хватерĕн ăшчиккине, библиотекăна, çывăрмалли пÿлĕме курса çаврăнсан вăл çавăнтах ывăлĕшĕн хавасланса кайрĕ, хисеплес килчĕ.

Хăнасем харăсах пуçтарăнчĕç: паллă авиаконструктăрпа арăмĕ тата хĕрĕ çитрĕç, икĕ ромбăллă çар çынни, поет, летчик, инженерсем, артиссем т. ыт. те—хăшĕ кам иккене пĕлсе пĕтерме те хĕн. Хăнасем темле хаклăччен илтмен йапаласем çинчен калаçаççĕ пулсан та, Силă Иванăвич савăнса ларать, вăл хăйĕн ывăлĕн тусĕсем çакăн пек маттур та ăслă çынсем пулнăшăн хавасланать.

Ерехсем тултарчĕç. Поет курка çĕкаерĕ:

— Йулташсем, пайан епĕр кунта хамăрăн тусăмăра, летчик Гришă Горбаткова орден парса наградăланă йатпа тата унăн ашшĕ, пирĕн чысăлă хăна Силă Иванăвич Мускава килнĕ йатпа пуçтарăнтăмăр. Епĕ пĕррех курка пире çакăн пек курма йăтма тивĕçлĕх панă хамăр аттесемшĕн çĕклеме сĕнетĕп. Пирĕн ăрăва ырă пурнăç панă мухтавлă атте-аннесемшĕн!

Хăнасем куркасене пушатрĕç, кăшт шавласа илчĕç, унтан пурте Силă Иванăвича отметлă сăмах калама ыйтрĕç. Старик çĕн тери паллă çынсем унăн ăшĕнче çавăнта хăнана килнĕшĕн питĕ савăннă, кăмăртеннипе нимĕн калама аптрарĕ. Ура çине тăчĕ... Питĕ нумай пурнăçлă те ăслă сăмахсем килчĕ унăн çак çамрăксене—вĕсем, телейлĕ те савăнăçлă çынсем, наукăна лайăх пĕлни çинчен те, ĕçлеме кăна мар, ăслă ĕçме пĕлни çинчен те каласшăн пулчĕ, анчах пуринчен ытларах унăн хăйĕн иртнĕ çамрăклăхĕ, хăйпе пĕр вăхăтри етемсен çамрăклăхĕ ĕлĕк ăнăр та тĕксĕм иртни çинчен, пусмăрлăх сăнчăрне йĕпле çапса аркатса çак ирĕклĕхе илни çинчен—тата ытти чылай йапаласем çинчен те тĕплĕн каласа парас килчĕ çакă кĕрекере. Силă Иванăвич куркана çĕклерĕ, хăнасем шăпах пулчĕç. Старик вĕсене хăйĕн ĕçпе тăртанса хĕвелпе пиçнĕ пуринпе йунарĕ те, каларĕ:

— Астăвăр! Лерен... кирлĕ пек астăвăр...—урăх нимĕн те тупса калаймарĕ вăл. Анчах вăл сăмахсемпе ватă шахтĕр мĕн калас тенине пурте ăнланчĕç.

— Ан хăра, атте, куç шăрçине сыхланă пек сыхлатпăр!..

Çурçĕр тĕлĕнче хăнасем килĕсене саланма пуçларĕç. Кĕркури ашшĕне çывăрас умĕн тухса уçăлса килме сĕнчĕ, старик хавасах турĕ, вара иккĕшĕ те тумланса пÿртрен тухрĕç. Шăп алăкран тухнă çĕрте вĕсене пĕр машинă кĕтсе тăрать. Вăрăм та лутра машинăн лакпа вакĕлпе сăрланă пайĕсем тĕттĕм çĕрте те ылттăнла-кĕмĕлле йăлтăртатса тăраççĕ.

—Ай, лар ман хыçран!—чĕнчĕ ывăлĕ машинă алăкне çăраççине уçса.

Силă Иванăвич хăйусăрлансах машинă ăшне кĕчĕ те ывăлĕпе йунашар ларчĕ. Кĕркури арăмĕпе поет кайа ларчĕç. Машинă вик сасăсăр вырăнтан тапранса кайрĕ, йур лартнă кукăр-макăр тĕкăрлĕкĕсем витĕр ăслă шоссе çине тухрĕ

[illegible]

Испани правительствине кăштах реорганизациленĕ

Августăн 16-мĕшĕнче Негрин пуç пулса йертсе пынă Испани правительстви отставкă пани çинчен хаçатра çырнăччĕ.

Отставкăн сăлтавĕ çапла пулнă: икĕ министр—„ĕçлев министрĕ тата портфельсĕр министр" Испанири çар промышленноçне централизацилесе тăвасси пирки правительствă йышăннă декретпа килĕшмесĕр правительствăран тухнă. Чăннипе илсен, ĕç кунта Негрин правительствине салатса йарассинче пулнă. Çав икĕ министр та халăх фронтне кĕрекен чи сылтăм партисен представителĕсем пулса тăраççĕ, правительствă кризисĕ тăвас тесе, вĕсем республикăлă Испанин йут çĕршывсенчи тăшманĕсен заданийĕсем тăрăх ĕçленĕ.

Анчах Испани халăхĕ политикантсене тата интригантсене хăйĕн çурăм хыçĕнче правительствă переворочĕ тума, çĕршыв умĕнче тава тивĕçлĕ пысăк ĕçсем тунă тата халăх массисемпе çар хушшинче пите пысăк шанчăклă Негрин правительствине салатса йама памарĕ. Негрин патне Испани компарти Политбюровĕнчен, социалисла партирен, рабочисен пĕтĕмĕшлĕ сойузĕнчен тата çĕршыври политикăлă ытти организацисенчен, çавăн пекех фронтсенче çапăçакан бойецсенчен те пит нумай çырусем, телеграммăсем, зайавленисем килчĕ. Вăл çырусенче Негрин правительствине шаннине тата халăхпа унăн çарĕ правительствă кризисĕ тăвассине хирĕç пулнă ирĕк-кăмăлне пĕр шухăшлăн кăтартнă. Испани компарти тĕпкомĕн Политбюровĕ Хозе Диас алă пусса йанă çырура правительствă туса ирттернĕ мĕн пур ĕçсемпе компарти пĕтĕмпех килĕшнине паллă тунă. Икĕ министра отставкăна тухма сăлтав панă йулашки декрет пĕр тавлашса тăмасăрах кирлĕ декрет пулса тăрат. Хĕçпăшал техники йенчев республикă çарĕнчен чылай çÿлте тăракан пăлхавçăсемпе интервентсене хирĕç вăрçă пынă вăхăтра, çар промышленноçĕ, паллах, унăн хуçисем мĕнле шутланă пек мар, вăл пĕр план тăрăх ĕçлеме кирлĕ.

Йулашкинчен Негрин правительстви республикă пуçĕнчех йулнă. Кайнă министрсен вырăнĕсене Каталонири пĕрлешÿлĕ социалисла партин членĕ Хозе Регас (ĕçлев министрĕ) тата Баскри националист Томас Бильбао (портфельсĕр министр) йышăннă.

Çапла ĕнтĕ, реорганизациленĕ правительствăра Каталони тата Баскони представительствисем сыхланса йунă,—халĕ правительствăран кайнă министрсем формальнă вĕсен представителĕсем шутланса тăнă. (Чăннипе илсен, вĕсем чи сылтăм партисен представителĕсем пулса, политикăлă лачакан тата Испани республикин йут çĕршывсенчи тăшманĕсен ирĕкне пăлăртса тăнă пулнă).

Испани халăхĕ—вăл хăйĕн кунçулне хăйех татса панине тата республикăлă Испанири халăх правительствине банкрота тухнă политикантсемпе улăштарма май çуккине кăтартса пачĕ.

Чехословакири лару-тăру

Пурте пĕлеççĕ, икĕ ерне кайарах Чехословаки столицине—Прагăна Англи советникĕ лорд Ренсимен пынă. Унăн задачи—Чехословаки правительствипе Гитлер агентури—Генлейн парртийĕ хушшинчи тавлашулă ыйтусене Гитлерпе Чемберлен кăмăлне каймала май татса парасси. Чехословаки çинчен тăракан ыйтура Чемберлен Гитлерпе кавар тунă.

Англи советникĕ Прагăра пурăнни, вăл кунсеренех генлейнăвĕçсемпе канăшлани генлейнăвĕçсене тата Чехословакири пĕтĕм фашисла вăйсене правительствă çине хĕсме хĕтĕртсе тăрат, калаçусем пуçлас вăхăта вĕççĕр тăсса пыма, чăннипе илсен вăл, калаçусене çĕмĕрме хĕтĕртет.

Генлейнăвĕçсен провокацийĕсем каллех майăн 21-мĕш умĕнхи пек пулса тăвă; пурте пĕлеççĕ, майăн 21-мĕшĕнче Германи çарĕсем Чехословакине тапăнса кĕме ĕмĕтленнĕ пулнă. Чикĕ хĕрринчи пур районсенче те августăн 15-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшне çитиччен фашисла штурмовиксен отрйачĕсен çĕрлехи „маневрĕсем" пулса пыраççĕ.

Августăн 17-мĕшĕнче Чехословаки министрĕсен кабинечĕпе Генлейн парти делегацин пĕрлехи ларăвĕ пулса иртнĕ. Генлейн парти делегацин председателĕ Кундт ларура, правительствă сĕнсе тăратнă. Саккун пройектне—çĕршывра нацилĕ хутшăнусене йĕркелесе йарас шутпа тунă саккун пройектне Генлейнăвĕçсем йышăнмасси çинчен пĕлтернĕ. Генлейнăвĕçсем Генлейн судет нимĕç партин Карлсбадри сйесĕнче, апрел уйăхĕнче кăларса тăратнă требованисенчен пĕрне те пăрахман, йăлтах урăхла, çав требованисене пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртсен кăна правительствăпа калаçса таталма пулат, тенĕ вĕсем. Паллă ĕнтĕ, вăл требованисем Чехословакине пайăн-пайăн вакласа уйăрасси патне, чăннипе илсен, Чехословакине фашисла Германи çăтса йарасси патне илсе пынă пулĕччĕç.

Августăн 18-мĕшĕнче лорд Ренсимен Генлейнпа нумай вăхăт калаçнă. Ĕçе пĕлекен çĕртен: Ренсимен судет-нимĕç проблемине тĕпрен илсен „сăнаса пĕлнĕ" те ĕнтĕ, унăн ăна татса памали планĕ те пур, тесе пĕлтереççĕ. Вăл планăн шухăшĕ çакăн пăк: Генлейн партин пур требованийĕсемпе те килĕшесси, Чехословаки республики хăй тĕллĕн пурăнакан çĕршыв пулса тăнине пĕтересси.

Генлейнăвĕçсем хăйсене хăйсем тыткалани, вĕсем министрсен кабинечĕн ларăвĕнче калани, вĕсем йулашки вăхăтра каллех вăйлатса йанă провокацисемпе террорсем, çавăн пекех тата Англи советникĕ уççăнах Генлейн партийĕ майлă тăни—Чехословаки халăхĕн çиллине çĕнĕрен çĕклесе йачĕ. Августăн 18-мĕшĕнче пĕтĕм çĕршыв тăрăх çĕнĕрен нумай йышлă митингсем, пухусем, демонстрацисем пулса иртеççĕ. Вĕсем генлейнăвĕçсен провокацийĕсене пĕтерсе лартма, Чехословакири Судет-Нимĕç облăçĕнче республикăлă çирĕп йĕрке туса хума тата правительствă туса хатĕрленĕ национальноçсен кодексĕн пройектне вăл Генлейнпа Англи советникĕн кăмăлне кайнипе кайманнине пăхса тăмасăр, пурнăçа кĕртме ыйтаççĕ. (ТАСС)

Испанири вăрçă

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Республикă çарĕн пулеметчикĕсем.

Фото (Сойузфото) „Пресскпише".

Комсодсен ĕçне—çÿлĕ вырăна

Пирĕн республикри ĕççыннисем Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займне пысăк хастарлăхпа çырăнчĕç. Ку ĕç Шупашкар хулинче уйрăмăнах ăнăçлăн иртрĕ. Кунта рабочисемпе служащисем, вĕренекенсем тата ытти ĕççыннисем хушшинче 2.410 пин тенкĕлĕх çырăннă. Ку ĕнтĕ ССР Сойузĕн Оборонине тĕреклетмели займран 500 пин тенкĕ ытларах пулат. Хулара пурĕ 298 коллектив шутланат. Вăтамăн илсен, 72 коллективра уйăхри ĕç укçинчен иртерсе, 146 коллективра виçĕ ернерен пуçласа пĕр уйăхри ĕç укçи чухлĕ, 80 коллективра 2 ернерен пуçласа 3 ернери ĕç укçи чухлĕ çырăннă. Чылай коллективсенче займа çырăнассине кĕске вăхăтра йĕркелесе çитерчĕç.

Займ сарас ĕçе килхуçи хĕрарăмсем те питĕ хастарлăн хутшăнчĕç. 41 хĕрарăм займ сарас тĕлĕшпе уполномоченнăйсем пулса ĕçлерĕç. Массăлă-ăнлантарулă ĕçе лайăх туса пынипе вĕсем çитĕнÿ туса пыраççĕ. Смирнова (Ленинград урамĕ) 1.410 тенкĕлĕх сарса 621 тенкĕ те 50 пус, Данилăва (Роза Люксембург урамĕ) 1.255 тенкĕлĕх сарса 385 тенкĕ, Польакова (Нагорнайа урамĕ) 570 тенкĕлĕх сарса 301 тенкĕ, Антонăва (Заводскайа урамĕ) 620 тенкĕлĕх сарса 250 тенкĕ укçа пухса пачĕç тата ытти те. Çапла вара килхуçи хĕрарăмсем хушшинче çĕнĕ займа 25 пин тенкĕлĕх çырăннă, иртнĕ çулхи займа 19 пин тенкĕлĕх çырăннă пулнă. Займ йенĕпе умра татах та хĕрÿлĕ ĕçсем тăраççĕ. Комсодсен коллективра займа çырăннине пĕтĕмпех сыхласа усрама, займшăн укçа хывас ĕçе лайăх туса пыма тăрăшмала. Анчах та çак ĕç нумай комсодсенче тивĕçлипе пулса пымасть-ха. 298 организацирен 192 организацире ку вăхăта çитсе те займ укçи пĕр пус та хывман.

Займ çырăнна çын ĕçрен тухса кайнă чух, займшăн укçа тÿленĕ чухлĕ займ облигацине парса йамала. Çĕнĕрен ĕçе килекенсем хушшинче займа сарма тăрăшмала. Иртнĕ çулсенче çак ĕçе тивĕçлипе туса пыни пулман. Иртнĕ çулсенче займ илме çырăннисенчен хăшпĕрисем облигацисене алла илеймесĕр йулнă. Иккĕмĕш пилĕкçуллăх (4 çулхи кăларăм) займ облигацисене алла памали вăхăт иртнине пула 38.135 тенкĕ государствă доходне памала пулчĕ. „ССР Сойузĕн Оборонине тĕреклетмели займ" облигацисем 56.620 тенкĕлĕх выртаççĕ. Çак займ облигацисене 1939 çулхи ийулĕн 1-мĕшне пĕтĕмпех çырăнакансене парса çитермеле.

Займ çырăнакансем хушшинче тĕрлĕрен справкăсем парас, тĕрлĕ ыйтусене ăнлантарса парас ĕçе организацилени кирлĕ. Анчах та нумай комсодсенче çак ĕçе организацилемен.

Кириллăв.

Займ уполномоченнăйĕсен ăмăртăвĕ

Мăн Сĕнтĕр йалсоветĕнчи (Тутаркас р.) займ уполномоченнăйĕсем Оринина йалсоветĕнчи уполномоченнăйсемпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Мăн Сĕнтĕр йалсоветĕнчи уполномоченнăй Виктăр Богданăв йулташ çак кунсенче çĕнĕ займ укçине 1375 тенкĕ, Григорий Кожевейникăв йулташ 940 тенкĕ пухрĕ. Йалсоветĕпе 7000 тенкĕ пухнă. Колхозниксемпе йединоличниксем займ укçине кĕске срукрах тÿлесе татма тăрăшаççĕ.

С. Орехăв.

Перепиçре ĕçлеме пултарулă çынсем уйăрнă

Пысăк Йенкасси йалсоветĕнче (Вăрмар районĕ) 1939 çулта пулакан халăх перепиçне хатĕрленес ĕç аван пырат. Йалсовет членĕсем колхозниксемпе йединоличниксен аслă пухăвĕнче тата уйра ĕçлекен колхозниксем хушшинче канкă вăхăтсенче перепис çинчен каласа ăнлантарчĕç. Йалсовечĕ перепиçе лайăх ирттерес тесе, перепиçре ĕçлеме ССРС, РСФСР, ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем вăхăтĕнче паларнă активиссене уйăрса хунă. Халĕ уйăрнă çынсем йалсоветри халăха 2 хут тĕрĕслесе тухса, кĕнеке çине çырса хучĕç.

А. Никифăрăв.

Хаçат витринисем çинчен

Шупашкарта хаçат витринисене нумай тĕлте курма пулат. Хăшпĕр учреждениссен (Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, Верховнăй Судпа прокуратурă тата ыт) хăйсен хаçат витринисем пур. Ку вăл лайăх. Анчах хаçат витрининче пĕр хаçата темиçешер кун тытни начар вара.

Гостиницă умĕнчи хаçат витрининче августăн 10-мĕшĕнче тухнă „Известия" хаçат халĕ те çакăнса тăрат-ха. Атăл хĕрринчи витринăсенче те час-часах хаçатсене икшер-виçшер кун улăштармаççĕ.

Ив. Е.

Чукăн сехет

(Й У Л А Ш К И)

те автобуссенчен, грузовиксенчен ирте-ирте асфальт сарнă йап-йака çул тăрăх çăмăллăн вĕçтерчĕ. Кĕркури темле пĕр пускăча пăрса лартрĕ—машинă ăшĕнче инçетрен ачашшăн илекен музыкă сасси сиксе тухрĕ, унтан чан çапнипе ĕтем сасси илтĕнсе кайрĕ.

— Лондон!—терĕ Кĕркури, унтан Лондонран радиопа мĕн каланине вырăсла куçарса пыма пуçларĕ. Силă Иванăвич ним хускалми ларса пырат, ывăлĕ çине чаăшшăн пăха-пăха хăйĕнчен хăй тĕлĕнет: ниушлĕ манăн ывăл çакăн пек пулчĕ-ши? Анчах ăшĕнчи темле туйăма пула старик халĕ те иккĕленме пăрахмасть-ха, так ахалех пăрăнас килмест унăн.

„Паллах, вĕсем культурăлă—ним сăмах та çук. Анчах ĕçре пиçсе курман-ха", шухăшлат хăй пуçĕнчен.

Машинă çунат хушнă пек вĕçет. Кайра, торпедă катерĕ хыçĕнчи йевĕр, тăвăл тухнă пек йур çĕклесе йулат. Куçкĕски йышши хулăн кĕленчесем витĕр шап-шурă та лăпкă уй-хиресем шуса иртеççĕ. Вăхăт чылай çĕрле, анчах ăна пăхмаççĕ. Прицепсем, чулсем, тимĕр-тăмăрсем, темле пичĕксем, йешчĕксем, мур пĕлсе пĕтерет—тата тем те пĕр тийенĕ грузовиксем çаплипех хирĕç пулаççĕ... Силă Иванăвич тĕлĕнсе кайрĕ.

* * *

Ирхине Кĕркури ашшĕне савăт аеродромĕ çине илсе кайрĕ: пайан унăн çĕнĕ конструкци тăрăх тунă хытăран та хытă вĕçекен истребителпе сăнавлă вĕçев туса ирттермеле. Шурă çунатлă хура кĕрен машинăна ангарăран вĕçев сулĕ çине кăларса лартнă. Кĕркури ашшĕне пилот ларакан кабинăна кăтартрĕ. Йалтăртатса куçа шартарса тăракан приборсене Силă Иванăвич ним чĕнмесĕр, çав тери тĕплĕн, сыхланса пăхкалат. Питĕ нумай вĕсем — „тĕлĕнмеле хуçалăх".

Кĕркури сăран комбинезон тăхăнчĕ те, кăкăрĕ çинче парашют тăхисене çаклатса машинă ăшне кĕрсе ларчĕ. Пилот ларнăли вырăн самольотăн хăрн вĕçĕнчех вырнаçнăскер, конструкци тăрăх питĕ сахал вырăн йышăнат, малти пайĕнче пĕтĕмпех хăватлă винтсемпе моторсем вырнаçăнса тăраççĕ. Хытарса лартнă пулеметсем тискеррĕн малалла тĕллеççĕ. Кĕмĕл тĕслĕ пропеллĕр йăл-йăл вылйаса тăракан хĕвел шевлине чăл-пар сапалатса йачĕ: машинă ларнă çĕртен пĕр чупмасăр тенĕ пек, сасартăк çÿлелле сикрĕ те, снарйад пек хăрушшăн уласа, пĕлĕте хăпарса кайрĕ. Силă Иванăвич хĕрлĕ кайăк вĕçнине çăварне карсах пăхса йулчĕ. Сылтăмала тата сулахайала пĕрер çавăрăнса илсе самольот пĕр вырăнта чарăннă пек пулчĕ, унтан каллех уласа йачĕ те, куç кĕрет пысăкланнăçемĕн пысăкланса килсе, тÿрех Силă Иванăвич çине ашлатса пычĕ. Старик урисем лаштăрах кайнипе чĕркуçленсе ларчĕ — машинă унăн пуçĕ тăринчен йут çиçĕм пек иртсе кайрĕ. Нумай та каймарĕ, тепĕр хут пĕтĕ рĕнсе илчĕ те калах пĕлĕтеле тирĕнчĕ. Старик ура çине тăрса чĕркуççисене силлерĕ. „Пыр та кур, —шухăшларĕ вăл, — вăт ку йапала..." Старик, кăчухвехи çамрăксен вăйĕпе пултарулăхĕ çине пит шанса пĕтерменскер, тинех парăнчĕ, ывăлĕн пултарулăхне хăй куçĕпе хăй курса тĕлĕнчĕ. Анчах ывăлĕ чарăна пĕлмест: самольота хытă йарса вăл умлăн-хыçлăн çирĕме йахăн пуç хĕрлĕ çаврăнчĕ, унтан йеринен анса пырса кĕç-вĕç çĕр сумне çитес чух самольота месерле тытрĕ те, пĕтĕм аэродром урлă çаплах вĕçсе касрĕ. Вăрман тĕлне çитсен самольот ÿпне çаврăнса хăйакăн тăчĕ, вара усăннă çунаттипе йура тивнĕ тивмен пырса, Силă Иванăвич сăмси çывăхĕнчех тискер тăвăл пек тустарса иртсе кайрĕ. Самольот начах çĕрелс анат, темиçе тĕрлĕ çаврăна çаврăна илет, çавăнтах çÿлелле тирĕнет — старикĕн пĕрре хĕрсе, тепре тĕлĕннипе çан çурăм тăрăх сивĕ сăрăлтатса кайат. Старик тарласа чăм шыва ÿкрĕ.

Сасартăк самольот пĕр çур секундлăха чарăнчĕ, сăмсипе чикĕнсе пуç хĕрлĕ тăчĕ те, урнă пек пĕтĕрĕнсе çĕреле анчĕ. Силă Иванăвич хăранипе куçĕсене хупрĕ, „пĕтрĕ" терĕ вăл. Çĕр çумне çитсен пилот самольота тÿрĕ тытрĕ, кăшт кайрĕ те пынă шеппех çĕр çине анса ларчĕ. Силă Иванăвич çамки çинчи тарне çĕлĕкпе шăлса илчĕ. Хăй куçĕпе хăй курчĕ вăл, ĕненчĕ, урăх нимĕн те кăтартма кирлĕ мар. Ывăлĕ ăшшăн куласа кабинăран тÿрех йур çине сиксе анчĕ, парашютне хывса хучĕ те, техника темле кăтартусем пачĕ.

— Ну мĕнле, апата кайатпăр пуль? — терĕ Кĕркури, шлемне хывса автомобилĕн кайри ларчăкĕ çине пăрахрĕ.

Ашшĕпе ывăлĕ киле таврăнма тухрĕç. Ывăлĕ машинă тытнă, ашшĕ ун çинчен куçне илмесĕр пăхса пырат. Иккĕшĕ те чĕнмесĕр пыраççĕ, анчах çак ним калаçусăр шăвакан минута иккĕшĕ те, ăнланаççĕ: ывăлĕ ашшĕнчен сăмах кĕтет.

Силă Иванăвич кĕсйинчен хăйĕн чукăн сехетне кăларчĕ те, кушăркалă мăйăç тупанĕпе ывăлне çÿçрен шăлчĕ:

— Тыт!

Лĕтчик çамрăк хĕрÿлĕхпе ашшĕн аллине тытса чуптурĕ.

Йакку Арслан куçарнă.

„Орденлă Чăваш республикĕ" киножурналăн 8-мĕш номерĕ

(Режиссер Б. Вейланд, оператăр Б. Тимин)

Документлă-хроникăлă фильмсен Шупашкарти студийĕ «Орденлă Чăваш республикĕ» йатлă киножурналăн 8-мĕш номерне ÿкерсе пĕтерчĕ. Киножурналăн август уйăхĕнчи номерĕнче 5 сюжет.

1-мĕш сюжетра Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Сессине çутатса панă.

2-мĕш сюжетра пысăк тухăçлă тырпула пухса кĕртнине ÿкернĕ. Республикă уй-хирĕсенче 250 комбайн ĕçлеççĕ. РСФСР Верховнăй Совет депутачĕ орденоносец Острйаков йертсе пыракан «Хĕрлĕ Туçа» колхоз тырпула пĕр тăккаламасăр пухса кĕртнĕ.

3-мĕш сюжет—Ленинла-Сталинла комсомол XX çул тултарнине кĕтсе илме хатĕрлени. Çак чаплă йубилей йачĕпе чăваш республикĕнчи çамрăксем тăван çĕршыв-ана вальли парнесем хатĕрлеççĕ. Акă Мичурин йачĕпе тăракан колхозри (Йетĕрне р.) комсомол коллективĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн ăнăçлăн кĕрешет. Комсомолец Максим Краснов Хĕрлĕ Çар фрончĕ валли уйăрнă лашасене тăрăшса пăхса ÿстерет. П. Абрамăвă 19 аратлă пăру тăрантарат. Мих. Бычков «Мальчик» йатлă сысна açине 280 килограм (18 пăт) туртакан пуличчен пăхса ÿстернĕ.

4-мĕш сюжет—Сталинла Конституцин 119-мĕш статйи (канăç прави) мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине кăтартат. Кунта Илйинкăри канмалли çуртра пиншер ĕççыннисем каннине ÿкернĕ.

Йулашкинчен летчиксен çĕнĕ кадрĕсене хатĕрленине кăтартнă. Йапони военщинин ирсĕр провокацийĕсене хирĕç Шупашкарти аэроклубра вĕренекен учлетсем отличнă вĕренÿпе ответлеççĕ.

Киножурнала çак кунсенчех екрансем çинче кăтартма пуçлаççĕ.

Йĕпреçри митинг

ЙĔПРЕÇ. (Телефонпа). Сталинла авиаци кунне чысласа августăн 18-мĕшĕнче Йĕпреçре ĕççыннисен пысăк митингĕ пулчĕ. Митинга 600 çын ытла пуханнă.

Допризывник Петров йулташ митингра сăмах тухса каларĕ.

— Пирĕн Совет авиацийĕ,—тет вăл,—пĕтĕм тĕнчипе чаплă çĕнтерÿсем турĕ. Совет самольочĕсем, совет летчикĕсем пуринчен те хăвăрт, пуринчен те инçе, пуринчен те çÿлте вĕçеççĕ, мĕншĕн тесен авиацине вăйлатассишĕн пирĕн йуратнă çулпуç Сталин йулташ хăй ырми-канми тăрăшат. Тепĕр 12 кунран епĕ Хĕрлĕ Çар призывне тăратăп. Призыв кунне епĕ пысăк праçник пек хатĕрленсе кĕтсе илетĕп. Сталин йулташ капиталисăмлă йĕри-тавралăх хăрушлăхĕ çинчен асăрхаттарса каланисене пирĕн йаланах асра тытса тăмала. Фашиссем пирĕн Совет Сойузĕ çине вăрçăпа килме хатĕрленеççĕ. Анчах пĕтĕм Совет халăхĕ мобилизацилĕ хатĕр тăрат. Совет территорийĕ çине тапăнса кĕнĕ Йапони военщинине Хĕрлĕ Çар çирĕп отпор пачĕ. Советăн таса чиккисем çине алă çĕклеме хăйакан кашни тăшмана çавăн пек инкекех пырса çакланĕ.

Сывă пултăр çĕнтерÿлĕ Сталинла авиаци!

Сывă пултăр совет халăхĕн аслă çулпуçĕ, учителĕ — аслă Сталин!

Йулашкинчен митинг резолюци йышăнчĕ.

Вишневский.

Радио ĕçне ханкламан çĕрте

Кăçал Сĕнтĕрвăрри районне Чăваш радиокомитечĕ уполномоченнăй йарса пачĕ. Радиокомитетăн районсенчи уполномоченнăйĕсем кашни 3 кун хушшинчех пĕрре вырăнти „йулашки хыпарсен" кăларăмне парса пымала.

Сĕнтĕрвăрри районĕнче радио ĕçĕ пайан кун та тивĕçлĕ вырăнта мар. Ку ĕнтĕ районти хăшпĕр работниксем радио ĕçне ханкламаннинчен килет.

Сĕнтĕрвăрринчи узĕла çак икĕ виç çул хушшинче 6—7 çĕре куçарса хăтланчĕç. Халĕ вăл пĕр пĕчĕк пÿлĕме вырнаçнă. Аппаратсем ларакан пÿлĕмрех вешчанисем туса ирттереççĕ. Радиокорреспондентсем те çавăнтах пуçтарăнаççĕ.

Райĕçтăвком радио ĕçне тивĕçлипе ханкламасть. Лайăхрах çурт ыйтсан, райĕçтăвком председателĕ: „йăлăхтартăр ĕнтĕ есĕр уипа, куçарăр та кайăр Шупашкара", — тесе хурат.

Радиоузĕл çак йулашки кунсенче вырăнти вешчанисем чылайăх ирттерчĕ. Микрофон умĕнче колхоз бригадирĕсем, врачсем, колхоз председателĕсем, районри ответлă работниксем пулчĕç.

Радиоточкăсем районĕпе мĕн пурĕ 400 ытла, радиоприйомниксем 100 ытла ĕçлеççĕ. Районри пиншер радио итлекен йулташсем радио ĕçне лайăхлатма, ăна тата ытларах сарма ыйтаççĕ.

Н. Кайахăв.

Чукунçул çинче ĕçлекенсен олимпиади

Çак кунсенче Хусанта, Менжинский йачĕпе тăракан клубра, Хусан чукунçулĕ çинче ĕçлекенсен художествăлă пултарулăх олимпиади пулса иртнĕ. Олимпиадă пилĕк кун хушши пынă. Олимпиадăна хăйсен художествă пултарулăхне кăтартма чукунçул çинче ĕçлекен стрелочниксем, грузчиксем, обходчиксем, составителсем, пенсионерсем, килхуçи хĕрарăмсем пурĕ 600 çын ытла пынă.

Пирĕн Чăваш республикĕнчен олимпиадăра Канаш тата Улатăр станцисенчи хор коллективĕсем пулнă. Канашри чукунçул клубĕ çумĕнчи хĕрарăмсен хорĕ олимпиадăра Лисков композитăр гармониленĕ „Сталин çинчен хывнă йурра" тата „Сталин—пирĕн хĕвел", ытти йурăсене пысăк ăстăрлăхпа чăвашла йурласа панă. Канаш станцинчи хор коллективĕнче вакунсем йусакан савăтри работницă, РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Антонăва йулташ та пулнă. Улатăр станцинчи хор та олимпиадăра нумай йурăсем йурласа панă.

Ответлă редактăр
Н. М. СЕМЕНАВ.

Шупашкарти Ленин йачĕпе тăракан çĕвĕ çĕлекен артеле

КВАЛИФИКАЦИЛĔ ÇĔВĔÇСЕМ

(хĕрарăм тата арçын тумтирĕсене çĕлеме)

ТАТА

СЧЕТОВОДСЕМ КИРЛĔ

Адрес: г. Чебоксары, Коммунальная баня, вход со двора.

Правлени.

3—2

ШКУЛ АЧИСЕМПЕ АШШĔ-АМĂШĔСЕМ!

УСĂ КУРНĂ УЧЕБНИКСЕНЕ СУТĂР

Усă курнă учебниксене КОГИЗ-ăн Чăваш республикĕнчи уйрăмĕн пур кĕнеке кагазинĕсем те сутăн илеççĕ тата сутаççĕ.

5—5

Шупашкарти Государствă кирпĕч савăтне йалан ĕçлеме

БУХГАЛТЕР тата ПЛАНОВИК

кирлĕ

Хватер пур. Çак адрĕспе пымалла: г. Чебоксары, Государственный кирпичный завод, глав. бухгалтеру.

2—2

Чăвашавтогужтрестă йалан ĕçлеме

аслă бухгалтер, бухгалтĕрсем

тата

машинисткă кирлĕ

Пурăнма хватер пур.

Кларсен пайне пымала.

2—1

Шупашкарти кооператив техникумне

ÇАР ĔÇНЕ ВĔРЕНТЕКЕН

руководитĕл кирлĕ

Пыма килĕшекенсен Çар комиссариатĕнчен хут илмелле.

Ĕçупçи килĕшÿ тăрăх.

3—1

ШУПАШКАРТИ КОММУНАЛЛА ТРЕСТ МУНЧИ

пур кусăвăй организацисене, автотранспорта тата ытти те

пăслантарса тасатнă шыв

СУТАТ

Пĕр литр—35 пус

Адрес: г. Чебоксары, ул. Ярославская. Новая баня.

„Чăваш Коммуни" сырăнма хакĕ хваттер-пĕр уйăха 2 т. 50 пус, 3 уйăха 7 т. 50 п., 6 уйăха 15 т., сутăлăха 10 тенкĕ. Под письмене сыхăну уйрăмĕсем, письмоносцисем йышăнаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 444 Гор. Чебоксары. Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 863.